БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Сентябрь 5 шăматкун № 174 (9083)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
Мир вăрçа çĕнтерет. Мускаври предприятисенчи рабочисемпе служащисен пухăвĕсенче (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. Г. Царев.—Политикăлла вĕренӳри çĕнĕ ӳсĕмсемшĕн; Райком пленумĕ—парти вĕренĕвĕ çинчен (2 стр.).
Ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене хăвăртрах туса çитерессишĕн! А. Минин. И. Мешков.—Наташкин коммунист агрегачĕнче (2 стр.).
Паха та илемлĕ таварсем ытларах туса кăларар! (3 стр.).
В. Терентьев. — Падежсем çинчен пĕр-ик сăмах (2 стр.).
Л. Безыменский.—Хĕвеланăç Германире фашистла йĕркесем тăваççĕ (4 стр.).
Азири тата пĕтĕм тĕнчери миршĕн. Китай хаçачĕсем Япони милитаризмне çĕнтернĕренпе 8 çул тултарни çинчен (4 стр.).
Чехословаки Корея Халăх Республикине пулăшать (4 стр.).
Студентсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕ хупăннă (4 стр.).
Çурçĕрти çĕршывсен ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕ (4 стр.).

Халăх ырлăхĕшĕн вăя шеллемесĕр ĕçлер

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви çĕршыв экономикине малалла аталантарассишĕн, совет çыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн, культурине ӳстерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ. Ĕç çыннисене ырлăх кӳресси, вĕсен куллен ӳсе пыракан ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтересси Коммунистсен партийĕшĕн тĕп закон пулса тăрать.

Йывăр промышленноçа аталантарас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсем халăха кирлĕ таварсем туса кăларас ĕçре татăклă, пысăк çĕкленӳ тума, çапла вара тĕп задачăна—мĕнпур совет çыннисен материальнăй пурнăçне малалла лайăхлатса пырассине ăнăçлă пурнăçлама пур майсене те туса пачĕç. Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тăрăх халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине, 1950 çулхипе танлаштарсан, 65 процента яхăн ӳстермелле. Партипе правительство çакăн пек задача кăларса тăратрĕç: халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине, пилĕк çуллăх планĕн çак задачине чылай малтан тултармалла тăвас тесе, пысăк хăвăртлăхсемпе вăйлатса пымалла.

СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ çапла каларĕ: задача çакăн пек пулать — çитес ик-виçĕ çул хушшинче çĕршывра апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем çителĕклĕ таранах пулмалла тăвас пулать, кирлĕ таварсене пурне те кашни хулара, кашни районта тупма май пултăр. Çакăн пек тăвас тесен халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине татăклăн вăйлатмалла, çăмăл тата апат-çимĕç промышленноçне халичченхинчен хăвăртрах аталантармалла тăвас пулать.

СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисене, сессире СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ тухса каланине совет çыннисем пурте чун-чĕререн хапăл туса йышăнчĕç. Рабочисем, колхоз хресченĕсем, интеллигенци çак решенисенче Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин ăслă политикине, халăхсен интересĕсене тивĕçтерекен политикăна, Тăван çĕршывăн хăватне малалла тĕреклетмелли, ĕçсыннисен пурнăçне пур майсемпе те лайăхлатмалли политика пурнăçа кĕрсе пынине кураççĕ.

Предприятисенче, МТС-семпе колхозсенче халăха кирлĕ таварсем нумайрах туса кăларма, вĕсен пахалăхне лайăхлатма пулăшакан çĕнĕ майсемпе резервсене палăртаççĕ, наукăпа техникăн çитĕнĕвĕсемпе туллинрех усă курма тăрăшаççĕ. Рабочисем, колхозниксем, интеллигенци партипе правительство чĕнсе калани çине ĕç тухăçлăхне ӳстернипе, продукци пахалăхне лайăхлатнипе, чĕртаварсемпе топливо тата электроэнерги перекетленипе ответлеççĕ.

Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле пирĕн республикăри ĕçсыннисем те Тăван çĕршыв экономикине тата хăвăртрах аталантарассишĕн, партипе правительство кăларса тăратнă задачăсене чыслăн пурнăçлассишĕн ырми-канми кĕрешеççĕ. «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн паянхи номерĕнче Шупашкар хулинчи хăшпĕр фабрикăсемпе заводсен тата промысла коопераци артелĕсен руководителĕсемпе стахановецсем редакцире пулса иртнĕ канашлура тухса каланисем пичетленсе тухаççĕ. Çĕвĕ çĕлекенсен, чăлха çыхакансен, çăнăх авăртакансен, çăкăр пĕçерекенсен, макарон тăвакансен, савăт-сапа юсакансен, кĕскен каласан, тĕрлĕ предприятисенче тата тĕрлĕ профессисем тăрăх ĕçлекен совет çыннисен пурин те пĕр шухăш-туйăм: халăха кирлĕ таварсем ытларах туса кăлармалла, япаласен ассортиментне нумайлатмалла, продукци пахалăхне лайăхлатмалла.

Халăх ыйтнине шута илсе, предприятисенче таварсен ассортиментне пăхса тухаççĕ, технологи процесне çĕнетсе лайăхлатаççĕ, йывăр ĕçсене механизацилеççĕ. Шупашкарти çĕвĕ фабрикинче çĕнĕ фасонсем тăрăх костюмсемпе кĕпесем çĕлеме тытăннă. Арман комбиначĕ ĕлĕкхинчен чылай ытларах шурă çăнăх авăртса кăларать. Промкомбинат, тир-сăран комбиначĕ, чăлха фабрики тата ытти предприятисемпе артельсем те халăх ыйтнисене пур енчен те тивĕçтерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттереççĕ. Уйрăмах апат-çимĕç комбиначĕ пуçарулăх ĕçленинĕ палăртас пулать. Çак комбинат коллективĕ вырăнти чĕртаварпа ытларах усă курма тăрăшать. Çырла, кăмпа, пахча çимĕç, пыл хатĕрлесси кунта йăлана кĕнĕ.

Республикăри ытти хуласемпе районсенче те партипе правительство кăтартса панисене пурнăçлас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттереççĕ. Анчах çав паха тĕслĕхсем пысăк ĕçĕн пуçламăшĕ çеç пулаççĕ. Уйрăм предприятисен руководителĕсем çав-çавах кивĕлле ĕçлеççĕ, производствăри çитменлĕхсене пĕтерме, халăх ыйтнине пур енчен те тивĕçтерме тăрăшмаççĕ. Уйрăмах вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн чылай предприятийĕсем япăх ĕçлеççĕ. Йĕпрес, Етĕрне, Советски тата Чкаловски районĕсенчи промартельсенчен пĕри те пĕрремĕш çур çулхи плана тултарман. Первомайски, Пăрачкав, Куславкка районĕсенче те нумай артельсем юхса пыраççĕ. Апла пулин те Чăвашпромсовет тата асăннă районсенчи партипе совет организацийĕсем промартельсен ĕçне йĕркелеме тăрăшмаççĕ.

Хăшпĕр предприятисенче, продукци туса кăлармалли плана хисеп тĕлĕшĕнчен тултарас тесе, государствăна хирĕçле ĕçсем тăваççĕ, планра палăртнă чи кирлĕ йышши продукци туса кăлармалли задание пурнăçлайманнине иккĕмĕш вырăнта тăракан япаласене планран ирттерсе туса кăларнипе витме тăрăшаççĕ. Вырăнти тата топливо промышленность министерствине пăхăнса тăракан предприятисен 33 йышши япала туса кăлармалла. Асăннă предприятисем пĕрремĕш çур çулта плана çакăр йышши япала енĕпе çеç тултарнă. Çав вăхăтрах халăха питех кирлĕ мар япаласем (чăпта, тимĕр-тăмартан тунă япаласем) планран ирттерсе туса кăларнă.

Ĕçсыннисене, çавăн пекех колхозсемпе апат-çимĕç промышленность предприятийĕсене пахча çимĕç, кăмпа тăварлама катка-пичке нумай кирлĕ. Анчах нумай промкомбинатсемпе промартельсем катка-пичке туса кăлармалли плана уйăхран уйăха тултармаççĕ. Строительство материалĕсем, урапа-çуна, сĕтел-пукан, вĕлле туса кăларасси, пулă тытасси уйрăмах юлса пыни пысăк çитменлĕх пулать.

Вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн ĕçĕнчи тепĕр пысăк çитменлĕх вăл продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, таварсен хакне йӳнетессишĕн тимлĕн кĕрешменни пулать. Нумаях пулмасть республикăра райпромкомбинатсемпе промартельсем туса кăларакан таварсен выставкисем пулса иртрĕç. Çав выставкăсене пурĕ 961 япала тăратнă. Правительство ятарласа уйăрнă комисси выставкăсенчи 339 япала çеç стандартлă пулнине палăртнă.

Асăннă тĕслĕхсем нумай предприятисенче Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ кăтартса панă çитменлĕхсене пĕтерме, ĕçе çĕнĕлле йĕркелеме тăрăшманнине, министерствăсем, партипе советсен вырăнти органĕсем предприятисене япăх ертсе пынине кăтартаççĕ.

Халĕ, совет халăхĕ промышленность умне пысăк требованисем тăратнă вăхăтра, предприятисемпе промартельсен ĕçне хăвăртрах лайăхлатмалла, вĕсен коллективĕсен творчествăлла активлăхне пĕрмаях ӳстерсе пымалла.

Республикăра халăха кирлĕ паха таварсем нумай туса кăларма мĕн кирли пурте çителĕклĕ. Пирĕн чĕртавар, топливо, ĕç вăйĕ çителĕклĕ. Предприятисем оборудованипе, станоксемпе хĕçпăшалланнă. Техникăна алла илнĕ пултаруллă кадрсем ӳссе çитĕнчĕç. Предприятисенчи хуçалăх руководителĕсем, партипе профсоюз организацийĕсем продукци ытларах туса кăларма, таварсен пахалăхне лайăхлатма пулăшакан пысăк майсемпе туллинрех усă курма, хуçалăха ертсе пырас тата организацилĕ ĕçсене çӳлĕ пусăма хăпартма тивĕçлĕ.

Предприятисемпе промартельсен чи пысăк задачисенчен пĕри вăл таварсене илемлетессине татăклăн лайăхлатасси пулать. Паха тата илемлĕ таварсем туса кăларма хăвăллăн тытăнмалла. Çапла тăвас тесен производство культурине ӳстермелле, кивелнĕ технологи процесне пăрахăçа кăларса, çĕнĕ технологи туса хатĕрлемелле, рабочисен квалификацине пĕрмаях хăпартмалла, техникăлла пайсенче ĕçлекенсемпе мастерсен ответлăхне вăйлатмалла, малта пыракан коллективсен тата новаторсен опычĕпе анлă усă курмалла.

Совет çыннисен ӳссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтересси парти организацийĕсен ĕçĕнче тĕп вырăнта тăмалла. Вĕсен халăха кирлĕ таварсем туса кăларакан предприятисенче партипе-политикăлла тата массăлла-агитаци ĕçе вăйлатмалла, пилĕк çуллăх плана срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăртăва анлă сармалла.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕ уçăласси çинчен

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ сентябрĕн 7-мĕшĕнче 16 сехетре Советсен çуртĕн ларусем ирттермелли залĕнче уçăлать.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

Çĕршыв уй-хирĕсенче

ВЛАДИВОСТОК. Хороль районĕнчи механизаторсем ир пулакан пĕрчĕллĕ тырăсене пухса кĕртес ĕçе вĕçлесе пыраççĕ. Тырпула пухса кĕртсе пĕтерни çинчен крайри районсем çурри ытла ĕнтĕ рапорт панă.

Акналли çĕр лаптăкĕ чылай ӳснĕ пулсан та, кăçал тырпула пур çĕрте те иртнĕ çулхинчен хăвăртрах пухса кĕртеççĕ. Тырпула комбайнсемпе кăна пухаççĕ. Пысăк çĕр лаптăкĕсем çинче комбайнсем ушкăнпа ĕçлеççĕ. Нумай колхозсенче итемсем çинчи ĕçсене механизацилесе çитернипе комбайнсемпе пухса кĕртнĕ тырпула çав кунсенех тасатса элеваторсене ăсатаççĕ е колхоз. пулинисене кĕртеççĕ.

КРАСНОДАР. Нур çĕрте те табак çулсе пухас ĕç сарăлса пырать. Кубаньри колхозсем табак ӳстерес ĕçре ĕçкунĕсем расходлассине виççĕмĕш пайĕ чухлĕ чакарнă. Çакна шултра çулçăллă «Остролист» сортлă табак туса илме тытăннипе пурнăçланă. Çак сорта Пĕтĕм Союзри табакпа махорка енĕпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн селекционерĕсем ĕрчетсе кăларнă.

КУРСК. Çĕрулми пухса кĕртме тытăннă. Кривецкой МТС-ĕ колхозсенче çĕрулми кăлармалли тракторсемпе ĕçлет. Тракторсемпе 60 процентран кая мар çĕрулми пухса кĕртмелле.

Сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС).

Çĕнĕ вырăнти çĕр мамăкĕ

ХАНКИ (Хорезм облаçĕ), сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Аму-Дарья айлăмĕнче каçса çӳреме çук вĕтлăх вăрман пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ханки районĕнчи çĕр мамăк акса тăвакансем, çĕнĕ техника пулăшнипе, çак вырăнта çĕршер гектар çĕр мамăкĕ тата ытти ялхуçалăх культурисем акса тума тытăннă. Ӳсентăрансене шăварма насуссемпе усă кураççĕ.

Ахунбабаев ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çуркунне 100 гектар ытла çĕнĕ çĕрпе усă курма тытăннă. А. Икрамовпа Б. Рузметов бригадисем кунта вăтам шутпа гектартан 20—25-шер центнер çĕр мамăкĕ туса илнĕ. Колхоз районта пуринчен малтан çĕр мамăкĕ пухса кĕртме тытăннă. Ш. Рузметова, П. Эгамбердыева колхозницăсем тата ыттисем те кашни кун 80—90-шар центнер çĕр мамăкĕ пухаççĕ, нормăна чылай ирттерсе тултараççĕ.

Ĕнер Ахунбабаев ячĕпе тăракан колхоз çĕнĕ çĕр çинче çитĕнтернĕ çĕр мамăкне государствăна пама пуçланă. Ханки хатĕрлев пунктне хĕрлĕ обозпа 20 тонна çĕр мамăкĕ илсе пынă.

СТАЛИНГРАД ГИДРОЭЛЕКТРОСТАНЦИНЕ ТУНĂ ÇĔРТЕ.
Строительствăра çĕнĕ тапхăр пуçланнă—гидроэлектростанци çуртĕ пулмалли вырăнти котлованран экскаваторсемпе тăпра чавса кăларма тытăннă. Экскаваторщиксен котлованран пĕр миллион кубометр ытла тăпра чавса кăлармалла.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: 613-мĕш номерлĕ «Уралец» экскаватор пĕрремĕш самосвал çине тăпра тиет (экскаваторщикĕ—Иван Нетаев).
А. МАКЛЕЦОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларасси ӳсет

ВИТЕБСК. Облаçри апат-çимĕç предприятийĕсем апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларассине ӳстереççĕ, апат-çимĕçсен ассортиментне нумайлатаççĕ.

Витебскри макарон фабрики ĕнер ноябрь программи шучĕпе продукци пама тытăннă. Витебскри сĕт завочĕ 50 йышши сĕт продукчĕ туса кăларать. Кăçал усламçу туса кăларасси, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 80 процент, типĕтнĕ сĕт туса кăларасси 15 процент ӳснĕ. Оршари хулинчи сĕт завочĕн коллективĕ те кăçал апат-çимĕç нумай туса кăларать.

Облаçра апат-çимĕç промышленноçĕн çĕнĕ предприятийĕсем туса лартаççĕ тата киввисене юсаса çĕнетеççĕ. Пилĕкçуллăх вĕçленнĕ çĕле область центрĕнче çăкăр комбиначĕ, виноград эрехĕсем хатĕрлекен завод, апат-çимĕç комбиначĕ ĕçлеме тытăнаççĕ. Мехово районĕн центрĕнче пулă консервĕ тăвакан завод лартма палăртнă.

ЛЬВОВ. Облаçра çу промышленноçĕ вăйланса пырать. Хальхи вăхăтра кунта 14 çу завочĕ ĕçлет. Вĕсем кăçалхи 8 уйăх хушшинче, иртнĕ çулхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, 10 процент ытларах çу, сыр тата ытти йышши сĕт продукчĕсем туса кăларнă. Продукци лайăхланнă. Хальхи вăхăтра 93 процент таран лайăх сортлă усламçу туса кăлараççĕ. Бродата Подкаменка çу завочĕсем пĕрремĕш сортлă продукци кăна туса кăлараççĕ.

Радехов районĕн центрĕнче çу завочĕ лартма тытăннă. Ку вăл облаçри чи пысăк предприяти пулать. Вăл талăкне 5.000 литр сĕтрен тĕрлĕ продуктсем туса кăлармалла. Завод çитес çул ĕçе тытăнать.

ТОМСК. Сентябрĕн 3-мĕшĕнче Вороновăри сыр завочĕ çулталăк планне тултарнă. Иртнĕ çулхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, завод 20 процент ытларах сыр туса кăларнă.

Облаçри çу завочĕсен коллективĕсем 8 уйăх хушшинче планпа пăхнинчен 45 тонна ытларах «Экстра» сортлă усламçу туса кăларнă.

Продукци туса кăларассине ӳстерес тата вĕсен пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе нумай предприятисене çĕнетеççĕ. Колпашевски тата Парбиг районĕсенчи çу завочĕсенче çĕнĕ оборудовани вырнаçтарса лартнă. Çакă вăл лайăх сортлă усламçу туса кăларассине 30 процент ӳстерме май парать.

Кăçал облаçăн çурçĕрти районĕсенче çĕнĕрен икĕ çу завочĕ ĕçлеме тытăнать тата 8 предприятие реконструкцилеççĕ.

Сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС).

Л. Н. Толстой произведенийĕсене пичетлесе кăларни

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче Лев Николаевич Толстой çуралнăранпа 125 çул тултарать. Вырăссен аслă писателĕн юбилейне пирĕн нумай нациллĕ Тăван çĕршыври мĕнпур ĕçсыннисем палăртаççĕ. Генилле художник пире парса хăварнă литература тĕнче культурин пуянлăхĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Л. Н. Толстой произведенийĕсене пирĕн çĕршывра пĕтĕм халăх юратса вулать. Л. Н. Толстой кĕнекисене Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем, вăл шутра—Октябрьти Социализмла Аслă революцичченхи хăйсен çырулăхĕ пулман халăхсем те — хăйсен тăван чĕлхипе вулаççĕ.

Пĕтĕм Союзри кĕнеке палати пĕлтернĕ тăрăх, Совет Союзĕнче совет влаçĕ çулĕсенче Л. Н. Толстой кĕнекисем 75 халăх чĕлхипе 55 миллион та 548 пин экземпляр пичетленсе тухнă. «Война и мир», «Анна Каренина», «Воскресение» ятлă романсене темиçе хутчен те пичетлесе кăларнă. Уйрăмах, «Хаджи Мурат» повесть анлăн сарăлнă. Ăна 39 халăх чĕлхипе 96 хутчен пичетлесе кăларнă. «Севастопольские рассказы» кĕнекене 49 хутчен, «Казаки» повеçе 44 хутчен пичетлесе кăларнă. Сочиненисен пухăвĕсем тата суйласа илнĕ произведенисен сборникĕсем те нумай тухнă.

Л. Н. Толстой çуралнăранпа 125 çул тултарнине палăртса, çĕршыври издательствăсем кăçал унăн кĕнекисене 30 халăх чĕлхипе 8 миллион ытла экземпляр пичетлесе кăлараççĕ. Государствăн илемлĕ литература издательстви 14 томлă сочиненисен пуххине кăларса пĕтерет. Кашни том тиражĕ—300 пин экземпляр.

(ТАСС).

Таймырти пулăçсем патĕнче

ДУДИНКА (Красноярск крайĕ), сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Полярти çуллахи кĕске кунсем вĕçленсе пыраççĕ. Час-часах ирхине тăм ӳкет. Апла пулсан та çырмасенче кӳлĕсенче пулă тытас ĕç хĕрӳллĕ пырать.

Таймыр наци округĕнчи пулăçсем хастарлă ĕçлеççĕ. Усть-Енисей районĕнчи «Красный таймырец» колхозри пулăçсен бригади çулталăк планне тултарнă, планран ирттерсе пулă тытать. Çак районтах «Новый путь», «Большевик», «Гвардеец» тата ытти колхозсенчи пулă тытакан бригадăсем те пулă тытмалли плана ирттерсе тултарнă.

Мир вăрçа çĕнтерет

Мускаври предприятисенчи рабочисемпе служащисен пухăвĕсенче

Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозаводăн 1-мĕш инструментальнăй цехĕнче илемлетнĕ транспарант курăнать. Уч çинче мĕнпур совет çыннисен шухăшĕсемпе туйăмĕсене палăртса тăракан сăмахсене çырса хунă: «Мир вăрçа çĕнтерет!»

3-мĕш инструментальнăй цех начальникĕ Кудинов юлташ заводăн тăватă цехĕн коллективĕсен пухăвне уçать. Вăл автозавод воспитанникне, мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн членне, Сталинла преми лауреатне С. В. Давыдова сăмах парать.

Давыдов юлташ Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕ çинчен каласа парать. Сесси тĕнчери мĕнпур харпăр хăйсене мирлĕн татса парассишĕн кĕрешмелли çĕнĕ çул-йĕре палăртрĕ, миршĕн тăракансен фронтне аслăлатма тата тĕреклетме пулăшрĕ.

— Мĕнпур çĕршывсенчи халăх массисем,—тет Давыдов юлташ,—калаçусем ирттересси государствăсем хушшинчи тавлашуллă ыйтусене татса памалли çул пултăр тесе тăрăшаççĕ.

Миршĕн тăракансен пысăк çĕнтерĕвĕ Корейăра перемири тунă пулса тăрать. Çак перемири, чи малтан,—мирлĕ пурнăçа ыратакан этемлĕх вăрçă чĕртекенсене хирĕç кĕрешнин результачĕ. Миршĕн кĕрешекенсен пысăк çитĕнĕвĕ, çавăн пекех, Берлинри провокаци путланса ларни пулать.

Совет халăхĕ Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕн решенийĕсене хĕрӳллĕн ырласа йышăнать. Совет çыннисем тĕнчери хару-тăру аталанăвне тимлĕн сăнаса тăраççĕ, мире тĕреклетес тĕлĕшпе хăйсем мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех тăваççĕ.

Совет Союзĕ мирлĕ пурнăçа юратакан улăп шакти политики, халăх пурнăçне вĕçĕмсĕр лайăхлатса пымалли политика кăтартса парать. Çĕршывра ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатасси — çак политикăн тĕллевĕ,—ăна кашни тĕрĕ кăмăллă çын ăнланать.

Давыдов юлташ çапла калать: Совет правительстви кăçалхи августăн 15-мĕшĕнче Франци, Англи тата США правительствисене Германи ыйтăвне мирлĕн татса парас ыйтупа панă нотăра кăларса тăратнă сĕнӳсене совет халăхĕ ырлать. Совет çыннисене Демократиллĕ Германи Республикипе Совет Союзĕн правительствисем хушшинче пулса иртнĕ калаçусем хавхалантараççĕ. Çак калаçусем миршĕн кĕрешес ĕçе кунĕ пысăк парне, пĕтĕм тĕнчери мир интересĕсемшĕн Совет Союзĕпе Германи халăхĕсем хушшинчи туслăха тĕреклетес çул çинче паллă тапхăр пулса тăрĕççĕ. Калаçусен йышă вăхăтра Совет правительстви Германи ыйтăвне тĕрĕс татса пама, хăвăртрах мирлĕ договор тума, демократиллĕ тата мирлĕ никĕс çинче Германи пĕрлĕхне туса хума татăклăн тăнине кăтартса пачĕ.

Совет çыннисем: Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ тĕнчери мĕнпур ыйтусене калаçусем ирттернипе мирлĕн татса парассишĕн кĕрешĕве вăйлатма йышăннă решени — вăхăтра йышăннă решени пулать, тесе шутлаççĕ. Çак решенине эпир ĕçпе çирĕплететпĕр.

Слесарьсен бригадирĕ Спиридонов юлташ 3-мĕш инструментальнăй цехра ĕçлекенсен коллективĕ, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн анлă пленумĕ йышăннă решение пĕтĕм чĕререн ырласа йышăнни çинчен калать.

Трибуна умĕнче 1-мĕш инструментальнăй цехра парти бюровĕн секретарь заместителĕ Федин юлташ. Вăл совет халăхĕ тĕнчери ыйтусене мирлĕн татса парассишĕн тăнни çинчен калать.

Малта пыракан рабочи-шлифовщик, комсомолец Уколов юлташ хуйхануллă сăмах калать.

Пуху пĕр шухăшлă пулса решени йышăнать. Унта çапла каланă: «Эпир Совет правительстви пĕтĕм тĕнчипе мире тĕреклетессишĕн, мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем хушшинче экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен çыхăнса ĕçлессишĕн тытса пыракан политикăна чĕререн ырласа йышăнатпăр.

Пирĕншĕн, совет çыннисемшĕн, реакципе фашизмăн тĕттĕм вăйĕсене хирĕç ырăм кĕрешĕвĕн пĕтĕм йывăрлăхне хăйсем тӳссе ирттернĕ çыннисемшĕн, мир — хамăрăн экономикăна аталантарма, халăхсен вĕçĕмсĕр ӳссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене пур майсемпе те ытларах тивĕçтерме пурнăç хушакан ĕç пулса тăрать.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕн тата мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн пленумĕн решенийĕсене ырласа, эпир, инструментальнăй цехсенче ĕçлекен рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхăн виççĕмĕш çулĕн планне срокчен тултарас тесе хамăрăн мĕнпур вăйпа пултарулăха хурса тата ытларах тăрăшса ĕçлеме пулатпăр. Çапла майпа эпир пĕтĕм тĕнчипе мире тĕреклетес ĕçе хамăр синчен вăй хуратпăр.

Эпир çакна çирĕппĕн шанса тăратпăр: хăйĕн тăван Коммунистсен партийĕ тавра пĕтĕçсе тăракан совет халăхĕ малашне те миршĕн кĕрешекен мĕнпур прогресслă этемлĕхĕн пуçĕнче пырĕ».

* * *

Сентябрĕн 3-мĕшĕнче Мускаври «Пролетарский труд» заводра ĕçлекен рабочисем, работницăсем, мастерсем, инженерсем, техниксем тата служащисем Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕ тата мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕ йышăннă решенисене сӳтсе явма пухăннă.

Пухăва завод комитечĕн председатель заместителĕ Н. А. Кондрашов уçнă. Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн ĕçĕсемпе решенийĕсем çинчен пĕлтерсе заводри парти организацийĕн секретарĕ П. К. Манько юлташ доклад тунă.

Трибуна умĕнче — главнăй механик заместителĕ инженер Н. А. Сахаров.

— Эпир Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕ государствăсем хушшинчи тавлашуллă ыйтусене калаçусем ирттернипе мирлĕн татса пама чĕнсе йышăннă решенисене чĕререн ырлатпăр,—тенĕ Сахаров юлташ.—Эпир хамăрăн ĕçпе социализмла Тăван çĕршывăн — пĕтĕм тĕнчери мир тĕрекĕ пулса тăракан Совет Союзĕн хăватне тĕреклететпĕр.

Цех мастерĕ Ф. Г. Мухин сăмах илет.

— Эпир вăрçăшăн мар,—тет Мухин юлташ.—Эпир, совет çыннисем, Совет правительстви мире сыхласа хăварас тата тĕреклетес тĕлĕшпе, халăхсем хушшинчи туслăха тĕреклетес тĕлĕшпе тытса пыракан тулăшри мирлĕ политикăна чĕререн ырлатпăр.

Пухура çамрăксен представителĕ токарь В. Н. Филатов хĕрӳллĕ сăмах каланă.

Пуху йышăннă решенире «Пролетарский труд» завод коллективĕ Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕ тĕнчери ыйтусене калаçусем ирттернипе татса парассишĕн чĕнсе йышăннă декларацие пĕр шухăшлă пулса ырланă.

* * *

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕн тата мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн пленумĕн ĕçĕсен итогĕсем çинчен пухусем çавăн пекех тата Мускаври трубасем тăвакан заводра, «Динамо» заводра, тир-сăран комбиначĕнче тата «Буревестник» фабрикинче пулса иртнĕ. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĚ

Политикăлла вĕренӳри çĕнĕ ӳсĕмсемшĕн

Шупашкарти электроаппаратура заводĕнче иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Совет Союзĕн Коммунистсен партийĕн историйĕпе теорине вĕренес тĕлĕшпе 20 кружок ĕçлерĕ. Çав кружоксенче пурĕ 387 çын вĕреннĕ. Кунсăр пуçне, заводри ертсе пыракан работниксем социализмла промышленность предприятийĕсен экономикине вĕреннĕ. Вĕсем валли семинарсем йĕркеленĕ. 104 çын марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн, 16 çын [illegible] ситечĕ çумĕнчи марксизм-ленинизм университетра вĕреннĕ.

Кружоксемпе семинарсенче, планра иртнĕ материалсемсĕр пуçне, КПСС XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене тата И. В. Сталинăн «СССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă ĕçне вĕреннĕ.

Кружоксем пурте вĕренӳ çулĕ тăршшĕпех йĕркеллĕ ĕçлерĕç, занятисене палăртнă кун иртмерменни е урăх куна хăварни пачах пулман. Вĕренекенсем те, пĕтĕмĕшле илсен, занятисене сиктермесĕр çӳрерĕç. Итоглă занятисем вĕренекенсем материала тăрăшса вĕреннине кăтартса пачĕç.

Лайăх енĕсемпе пĕрлех вĕренӳре пысăк ситменлĕхсем те пулчĕç. Парторганизаци секретарĕсемпе пропагандистсен нумайăшĕ пулса иртнĕ пĕрлехи канашлăвĕ ситменлĕхсене тĕплĕн уçса палăртрĕ.

Заводри партком занятисен идейăлла шайне ӳстерсе пырас тĕлĕшпе çителĕксĕр тăрăшнă, пропагандистсем е уйрăм вĕренекенсем занятисене мĕнле хатĕрленесшинне тĕрĕслесе тăман. Савна пула хăшпĕр занятисем идейăпа теори тĕлĕшĕнчен çителĕксĕр иртнĕ. Уйрăм пропагандистсем занятисенче историри фактсене е политикăри уйрăм положенисене пăсса кăтартсем те пулкаланă.

Сăмахран, «производительнăй вăйсем» мĕне пĕлтерни çинчен ыйтсан, пропагандист Егоров юлташ: «Эпир мĕн туса кăларни пурте производительнăй вăй шутланать», тесе ответленĕ. Тепĕр пропагандист вĕренекенсене капитализмла йĕркесем [illegible] çинчен тĕрĕс мар ăнлантарса панă.

Хăшпĕр пропагандистсем уйрăм сыпăксен историйĕн рольне пысăклатса кăтартнă, партин историйĕпе теорине юрăхсăр меслетпе вĕрентме пăхнă. Акă пĕр тĕслĕх. Партин XIX-мĕш съездĕнче тăванла компартисем умне [illegible] задача лартнă май И. В. Сталин каланă сăмахри хăшпĕр ыйтусене вĕренекенсем пихнесĕрех [illegible] вĕреннĕ. Анчах çав сăмахсен чăн-чăн пĕлтерĕшне вĕсем уçса калайман. Кун пек [illegible] занятисенче те сăв [illegible] пулкаланă.

[illegible] пулнă юлташсем [illegible] вĕренмен йĕркелес ĕçре матти [illegible] [illegible] кружоксенче вĕренме çинчен суйлани илес [illegible] ĕç çине тимлĕнрех пăхма кирли çинчен асăрхаттарчĕç. «Хăшпĕр юлташсем, тет пропагандист Цфасман юлташ, кашни çулах парти историне пĕрремĕш çул вĕренмелли кружока çырăнаççĕ. Çапла вара темиçе çул хушши пĕр пек материала вĕренсе лараççĕ. Парторганизацисен кружоксенче вĕренекенсене палăртнă чухне çакна тĕплĕн шута илес пулать».

Заводри партком марксизм-ленинизм теорине вĕренекенсем валли квалификациле лекцисем сахал иртерет, коммунистсен пĕтĕмĕшле [illegible] ӳстерессишĕн сахал тăрăшать.

Иртнĕ çулта завод пĕр тикĕс ĕçлесе пымарĕ. Уйăх пуçламăшĕнче сӳрĕнрех ĕçленĕ май юлашки вуннăкунлăхра штурмовщина меслечĕпе ĕçлени пулкаланă. Çакăн пек йĕрке вĕренӳ пахалăхне ӳстерес ĕçре те чăрмав кӳнĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче çак ситменлĕхрен хăтăлса ситмелле пулать. Администрацине партком çакна тĕплĕн шута илме пулчĕç.

Халĕ партком кружоксенче вĕренекенсен йышне палăртать. Кружоксемсĕр пуçне, çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче промышленность предприятийĕсен экономикине вĕренмелли икĕ семинар пулмалла. Çавăн пекех диалектикăлла тата историлле материализма вĕренмелли, политикăлла экономика тата И. В. Сталинăн «СССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă ĕçне вĕренмелли уйрăм кружоксем тума палăртнă.

Г. ЦАРЕВ,
заводри пропагандист.

Райком пленумĕ—парти вĕренĕвĕ çинчен

КПСС Етĕрне райкомĕн пленумĕ çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси çинчен сӳтсе явнă.

Иртнĕ çулта районти парторганизацисенче парти вĕренĕвне ытти çулхисенчен лайăхрах йĕркеленĕ. Пур кружоксемпе политшкулсенче те итоглă занятисем пулса иртнĕ.

Иртнĕ çулта 600 çын ытла марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕреннĕ.

Доклад тăрăх 9 çын тухса каласрĕ. Вĕсем парти вĕренĕвĕнче тунă ситĕнӳсемпе пĕрлех ситменлĕхсене те кăтартса пачĕç.

Парти райкомĕн бюровĕ, пропагандăпа агитаци пайĕ пропагандистсене кирлĕ пулăшу паман, вĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăман. Райком кружоксемпе политшкулсенче вĕренӳ мĕнле пынине сахал ситĕнет. Пропагандăпа агитаци пайĕ пропагандистсемпе тата консультантсемпе çителĕклĕ ĕçлемен. Вĕсене кирлĕ тăрав [illegible] тата методикăлла пулăшу паман, марксистла-ленинла теори ыйтăвĕсем урăх лекцисем сахал иртернĕ.

Райкомăн лекторсен группи çителĕксĕр ĕçлет. Райком секретарĕсем, пайсен заведующийĕсем, штатра тăракан пропагандистсем илсенче сайра хутра çеç пулаççĕ, ĕçсыннисем тата харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем валли лекцисемпе докладсем сахал иртереççĕ.

Комсомолецсен политикăлла вĕренĕвне япăх йĕркеленĕ. Чылай çĕрте вĕренӳ çулĕ тăршшĕнче 3—4 занятии çеç туса иртернĕ, вĕренӳ программине тултарман, итоглă занятисем иртермен. ВЛКСМ райкомĕ комсомолецсен политикăлла вĕренĕвне япăх ертсе пынă. Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе те комсомол райкомĕ начар ĕçлет.

Ситес вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе райкомпа пуçламăш парторганизацисем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Чылай çĕрте пропагандистсене уйăрман, коммунистсемпе калаçусем иртĕрмен, вĕренӳ çулне хатĕрленес ыйтăва парти пухăвĕсенче сӳтсе явман.

Пленум вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене [illegible] туса çитерессишĕн!

В. Ф. КУДРЯШОВ,—
Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнчи лайăх ĕçлекен комбайнерсенчен пĕри. Комбайнпа тырпул пуçха кĕртмелли задание 129 процент тултарнă.
Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Тырă парса татнă

ЭЛĔК. «Трудовик» колхоз членĕсем, СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн решенийĕсемпе хавхаланса, ялхуçалăх ĕçĕсене кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Колхоз августăн 28-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татрĕ. Халĕ МТС ĕçленĕшĕн натуроплата шучĕпе хатĕрлев пунктне тырă леçеççĕ.

Вырнă тырра капана хывас ĕç вĕçленсе пырать. Кантăр татса пĕтерне.

И. ПЕТРОВ.

Вырьăх апачĕ хатĕрлеççĕ

ВĂРНАР. Жданов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн членĕсем обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Кунта уй-хирпе улăхсенчи мĕнпур курăксене йăлтах çулса пухнă, капана хывнă. Артель силос хывмалли плана та районта чи малтан тултарчĕ.

Выльăх-чĕрлĕх валли апат нумай хатĕрлессишĕн колхозра А. Степанов юлташ ертсе пыракан бригада тăрăшса ĕçлет. Ку бригада кăçалхи ĕçре пысăк пултарулăх кăтартрĕ. Бригада, силос хывмалли шăтăксемпе башньăсене вăхăтра хатĕрлесе ситерчĕ те, силос хывас ĕçе питĕ йĕркеллĕ туса пырать. Силос тума акса ӳстернĕ тата ытти курăксене пуçтарса МТС силосорезкипе тураса хывнă. Çак сĕтеклĕ паха апата кашни ĕне пуçне 4 тонна хатĕрленĕ.

Хальхи вăхăтра бригада силос хывма шурлăхлă улăхсенчи, вăрмансенчи, садсенчи тата çырма-çатрасенчи курăксене пухать. Колхозниксем кашни ĕне валли 6 тоннăран кая мар силос хывса хăварассишĕн кĕрешеççĕ.

Çакăнпа пĕрлех колхозра улăм, арпа, пучах тата ытти выльăха юрăхлă апата тирпейлĕ пухса кĕртсе, лайăх упраса хăварассишĕн тăрăшаççĕ. Комбайнсемпе вырса пухнă тырпулăн улăмĕпе арпине йăлтах пухса кĕртнĕ. Улăм пухнă çĕрте, трактор волокушисĕр пуçне, лаша вăйĕпе сĕтĕрттермелли волокушăсемпе те тухăçлă ĕçленĕ.

Н. ШУМИЛОВ.

5

Наташкин коммунист агрегачĕнче

Чкаловски районĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхозăн витнĕ итемĕ çинче кăнтăрла та, çĕрле те ĕç шавĕ лăпланмасть. Кĕлте ларĕсем итем çине татти-сыпăксăр пырса тăраççĕ.

«МК-1100» молотилка [illegible] чарăнмасть. Уласа тăракан барабан айĕнчен типĕ тырă шĕкĕлченсе тухать.

— Ылтăн аллисем пирĕн Николай Александровичăн, — теççĕ колхоз членĕсем хастарлă машиниста мухтаса.

Чăнах та мухтамалла ăна. Н. Наташкин машинист ку ĕçре 6 çул хушши пĕр улшăнмасăр тăрăшса ĕçлесе чылай опыт тупнă.

— «МК-1100» молотилка — [illegible] машина. Унпа пĕлсе усă курсан, нормăра кăтартнă пек сменăра 12 тонна çеç мар, 30—35 тонна тырă çапса илме пулать,—тет Н. Наташкин машинист.

Н. Наташкин машинист «МК-1100» молотилкăпа иртнĕ çул 900 тонна тырă çапрĕ. Вăл тунă ситĕнӳсемпе лăпланмасть. Кăçал хастарлă механизатор 1,000 тонна тырă çапма обязательство илчĕ. Çав обязательствăсене чыслăн пурнăçласа тĕллевпе вăл çĕршывра чапа тухнă молотилка машинисчĕсен, Сталинла премин лауреачĕ Н. Бредюкпа Н. Бойко юлташсен ĕç опычĕпе усă курса ĕçлет.

Коммунист-машинистăн ĕçри ситĕнĕвĕ куç умĕнче. Вăл Калинин ячĕпе тăракан колхозра икĕ кунта 160 тонна ытла тырă çапрĕ. Халĕ Н. Наташкин юлташ Чкалов ячĕпе тăракан колхозра ĕçлет. Кунта та, сменăра 12 тонна çапмалла пулсан, 25—30-шар тонна çапать. Августăн 27-мĕшĕнче вăл тата пысăк ситĕнӳ турĕ, машинăна талăкĕпех пĕр чармасăр сехет графикĕ тăрăх ĕçлеттерсе 60 тонна ытла ырăш çапрĕ.

Мĕнрен килет-ха Н. Наташкин юлташ «МК-1100» молотилкăна тухăçлă ĕçлеттерни?

— Нумай çулхи опыт çакна кăтартса парать,—тет Н. Наташкин машинист,— машинăна пĕр кăлтăксăр ĕçлеттерессси хамăртан — машинистсенчен килет. Агрегата ĕçе хатĕрлесси çине питĕ тимлĕ пăхмалла, витнĕ итемсене лайăх хатĕрлемелле, машинăна техника тĕлĕшĕнчен лайăх сăнаса тăмалла, колхозниксене ĕç вырăнне тĕрĕс вырнаçтармалла. Çаксем пурте агрегата лайăх ĕçлеме чи кирлĕ условисем пулса тăраççĕ.

Молотилкăна юсанă чухне мĕнпур узелсене, механизмсемпе тĕп детальсене Н. Наташкин юлташ хăй тĕрĕслесе тухнă.

Молотилкăпа авăн çапнă çĕрте чи йывăр ĕçсенчен пĕри—барабана кĕлте парса [illegible]. Савăнпа та молотилка валли ĕçлесси барабанщик хăйĕн ĕçне мĕнле туса пынинчен нумай килет. Н. Наташкин юлташ барабан патне пултарулла, ку ĕçе лайăх пурнăçлама пултаракан колхозниксене [illegible] тикĕс парса тăма вĕрентет.

— Барабана кĕлтесене пĕр тикĕс ярса тăрасси çине [illegible] тимлĕ пăхма тивет, мĕншĕн тесен ыраш кăлтисем сыхран нумай сăлĕ,—тет машинист.

Ку [illegible] çапла ĕнтĕ. Барабан кĕлтесем пĕр тикĕс ярса тăмасан барабан ăшĕнче капланма пултараççĕ, ку вăл машинăна чылай вăхăт хушши чарса лартасси патне илсе пыма пултарать.

Барабан умĕнчи площадка çине 4 çын кĕлте парса тăрать, вĕсем сменăра икĕ хут улшăнаççĕ. Н. Наташкин юлташ колхоз членĕсене молотилка патне хăй вырнаçтарса тухать.

Н. Наташкинпа пĕрле Эливанов тракторист ĕçлет. Вĕсем иккĕшĕ те хăйсем ĕçлекен машинăсене питĕ лайăх пĕлеççĕ, ĕçре пĕр-пĕрне пулăшаççĕ, усăллă канашсем параççĕ.

Н. Наташкин машинист ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе молотилка çинче хăшпĕр улшăнусем тунă. Кĕлте хумалли площадкăна икĕ айкинчен те пĕрер метр сарнă. Барабан умĕнчи кĕлте хумалли сĕтеле те чылай анлăлатнă. Çапла туни, пиллĕк ĕнтĕ, ирĕккĕн ĕçлеме май парать, ĕç тухăçлăхне ӳстерет.

Тăрăшакан машинист ĕç хăвăртлăхĕшĕн çеç мар, тăкаланчăк ан пултăр тесе те тăрăшать. Çак тĕллевпе вăл çапнă улăм тухнă тĕле решетка лартнă. Улăм решетка çине ӳкет, унпа хутшăнса тухнă тырă пĕрчисем решетка айне тăкăнаççĕ те улăмпа пĕрле пăсран сыхланса юлаççĕ. Н. Наташкин юлташ, тăкаланчăк ан пултăр тесе, барабан лекине те питĕ лайăх йĕркеленĕ. Вентилятор мĕнле ĕçленине те яланах тĕрĕслесе тăрать. Машина пысăк хăвăртлăхпа ĕçленĕ чухне унăн элеваторĕ тырра ăсса илме ĕлкĕреймест. Элеватор тырра хăвăртрах ăсса илме ĕлкĕртĕр тесе, Н. Наташкин машинист ăна ĕçлеттерекен шкива пысăклатнă.

— Кăçал эпĕ 1,000 тонна тырă çапма обязательство илтĕм. 1.200 тоннăран пĕр килограмм та кая çапмастăп,—тет Н. Наташкин коммунист.

— Çапла. Пурнăçлатех вăл хăй каланă сăмаха,—терĕç итем çинчи колхозниксем те хастарлă машиниста мухтаса.

А. МИНИН,
МТС директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ,
И. МЕШКОВ,
«Авангард» хаçат редакторĕ.

Хастарлă ĕçре

ШĂМĂРШĂ. Вăсьурт ялĕнчи «Правда» колхоз кашни çулах уй-хирти тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртет. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн тата СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн решенийĕсемпе хавхаланнă колхозниксемпе колхозницăсем кăçал та тырпул пухас ĕçе кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерессишĕн ырă-канма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем паянхи куна хиртен 677 гектар çинчи тырăсене пухса кĕртнĕ. Хирте вĕрулми, вир тата кантăр анчах юлнă. Бригадăсенче халĕ авăн çапас ĕç анлăн саралса пырать. Пĕрремĕш бригада тырпул пухса кĕртес ĕçре малта пырать. Ку бригада авăн çапса пĕтерчĕ, ытти бригадăсене пулăшма тухрĕ.

Колхоз августăн 31-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли обязательствăна пурнăçларĕ.

Çакăнпа пĕрлех колхоз сортлă тырра 804 центнер вăрлăх валли хыврĕ. Халĕ колхозниксене аванс шучĕпе кашни ĕçкунĕ пуçне 2-шер килограмм тырă валеçнĕ.

«Правда» колхоз членĕсем вăйлă тырпул пухса илесси уй-хир ĕçĕсене вăхăтра та тирпейлĕ тунинчен килнине лайăх ăнланса илнĕ. Ялхуçалăх артелĕ агротехникăна пурнăçласа 238 гектар ыраш акса хăварчĕ. Акнă тырă пĕр тикĕс те парка шăтса тухнă. Халĕ хĕрсех кĕрхи сĕртме тăваççĕ. Кăçал октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне 350 гектар кĕрхи сĕртме тума палăртнă пулсан, августăн 31-мĕшĕ тĕлне пурĕ 208 гектар сухаланă. Ку ĕçре Евгений Поспеловпа Ильдиер Ухтиаров трактористсем пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсем сменăри ĕç нормине яланах 110—112 процент тултарса пыраççĕ.

Колхоз пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра тума палăртнă пур ĕçсене те ăнăçлăн пурнăçласа пырассишĕн кĕрешет. Колхозăн икĕ çил арманĕ кивелсе юрăхсăра тухнăччĕ. Савăн пирки колхозăн та, колхозниксен те çăнăх авăртма 7—10 çухрăма çӳреме тивнĕ. Халĕ колхоз çак армансене тĕпрен юсаса ĕçе ячĕ. Кунсăр пуçне, кăçалхи çул двигательпе ĕçлекен арман туса лартма палăртнă пулнă. Çак кунсенче армана туса пĕтерсе ĕçе ячĕç. Арман лайăх ĕçлет.

М. КАРИМОВ,

Йĕтĕне пултарма сарнă

Йĕпреç районĕнчи «Путиловка» ялхуçалăх артелĕнче техникăлла культурăсем акса тăвакан бригада çак кунсенче 18 гектар çинчи махорка касса пуçтарнă, 23 гектар çинчи йĕтĕне татнă. Колхозницăсем, йĕтĕн вăррине сийĕнчех çапса, йĕтĕн çурăмĕсене çерем çине сарса хураççĕ.

И. МАКСИМОВ.

Çĕнĕ вите

ЕЛЧĔК. Çак кунсенче «Трактор» колхоз чăх-чĕпсене усрамалли çĕнĕ вите туса пĕтерчĕ.

Колхоз государствăна çăмарта хатĕрлесе памалли плана ăнăçлăн тултарса пырать.

— Сентябрь уйăхĕнче государствăна çăмарта памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарса, ситес çулшăн аванс шучĕпе пама тытăнатпăр,—тет ферма заведующийĕ Мальцев юлташ.

Г. АЛТЫНОВ.

Колхозри строительство

ПЕРВОМАЙСКИ. Маленков ячĕпе тăракан колхозра обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли çулсеренех çĕнĕ витесем тăваççĕ. Ку ĕçе тума строительство бригади организациленĕ, унта пурĕ 30 çын ĕçлет. Иртнĕ çулта строительство бригади тăрăшса ĕçленипе пăрусем валли стандартлă вите, выльăх апачĕ пĕçерсе хатĕрлемелли кухня, 60 лаша валли вите тунă.

Строительство ĕçĕнче саман кирпĕчĕпе анлăн усă кураççĕ. Кăçал 95 пин кирпĕч çапса хатĕрленĕ.

Çапса хатĕрленĕ саман кирпĕчрен пысăк витесем тума тытăннă. Халĕ сурăхсене тата чăхсене усрамалли витесем, 200 тонна çĕрулми хумалăх подвал, сысна вити тата зерносушилка тăваççĕ.

Колхозри ĕçсене механизацилес тĕлĕшпе те чылай ситĕнӳсем тунă. Колхозăн двигатель тата электростанци пур. Вĕсен вăйĕпе молотилка, сортировка, арман, кантăр тылламалли машина ĕçлеççĕ. Кунсăр пуçне, автомашина валли чуркăсем татмалли, кирпĕч çапмалли станоксене механизациленĕ.

Механизаци колхозниксен ĕçне çăмăллатать, ĕç тухăçлăхне ӳстерет.

Кăçалхи çул ĕне фермине механизацилеме тытăнаççĕ. Халĕ 50 автопоилка тата автопоилка насусне илсе килнĕ.

В. ИГНАТЬЕВ,

Падежсем çинчен пĕр-ик сăмах

А. Иванов чĕлхеçĕ юлашки вăхăтра падежсем çинчен темиçе статья çырса кăларчĕ. «Коммунизм ялавĕ» хаçатра июлĕн 28-мĕшĕнче тухнă «Чăваш чĕлхине шкулсенче вĕренес ĕçри хăшпĕр ситменлĕхсем» ятлă статьинче, падежсем çинчен сăмах хускатса, «вĕсем чăваш чĕлхинчи пĕлтерĕшне тĕрĕс кăтартса памаççĕ», тет А. Иванов. Савăнпа та вăл чăваш чĕлхин грамматикине тата икĕ падеж кĕртесшĕн: -шăн(шĕн) аффикс хушăннине пулнă тĕллев падежĕ тата -сăр(сĕр) аффикс хушăннине пулнă çуклăх падежĕ.

Ку вăл чăваш чĕлхи вĕрентĕвĕнче çĕнĕ пулăш мар. В. Г. Егоров профессор çак падежсем çинчен темиçе çул ĕнтĕ студентсене лекци вулать, хăйĕн пичетленмен ĕçĕнче («Курс современного чувашского литературного языка») вĕсем çинчен тĕплĕн татса панă.

Тĕллевпе çуклăх падежĕсем чăваш чĕлхинче пур, анчах грамматикăна çыраканĕсем (савсен шутĕнче А. Иванов та) вĕсене уйăрса илеймен пирки çак падежсем хăйсен прависемпе усă кураймаççĕ.

-Шăн(шĕн), -сăр(сĕр) формăсем, -ран(рен), -ра(ре), -па(пе), -а(е) формăсем пекех, ĕлĕк хыççăмахсем пулнă, халĕ вĕсем аффиксене кусна, аффиксен ретĕнче çеç сӳреççĕ. Чăнах та аффиксем пулнине пĕлес тесен, аффиксемпе хыççăмахсем хушшинчи уйрăмлăхсене пăхса тухар:

1) Чăваш чĕлхинче хыççăмахсем лексикăллă пĕлтерĕше пĕтĕмпех сухатман, аффиксем хăйне уйрăн тăнă чухне лексикăллă пĕлтерĕш тытса тăмаççĕ: çине, варрине, патне; -шăн, -сăр, -ран.

2) Аффиксем хытă тата çемçе вариантсен пулаççĕ, хыççăмахсен вун пек вариантсем çук: -ăн, -ĕн, -шăн, -шĕн; çине, патне, витĕр.

3) Хыççăмахсене уйрăм çырасçĕ, аффиксене пĕрле: вăрман патне—вăрманшăн.

4) Аффиксем, хыççăмахсемпе танлаштарсан, хăйсен фонетикăлла йышĕ тĕлĕшĕнчен кĕске: варрине, сывăхне; -а, -е, -ра, -сĕр.

5) Аффиксем сингармонизм законне пăхăнса тăраççĕ, хыççăмахсем—пăхăнмаççĕ: вăрманшăн—вăрман валли, вăрмантан—вăрман варринчен.

6) Аффиксем, ялала ячĕсемсĕр пуçне, ытти пуплев пайĕсемпе те пĕрлешеççĕ, хыççăмахсем ялала ячĕсемпе çеç пĕрлешеççĕ: çырасшăн, çырассăр, çырасса, çырасран, анчах та «çырас патне» темеççĕ.

Çапла ĕнтĕ хыççăмахсем те, аффиксем те, сăмахсем хушшинчи грамматикăлла отношение кăтартса параççĕ пулсан та, пĕр-пĕринчен нумай енсемпе уйрăлса тăраççĕ. Çак уйрăм енсем—шăн(шĕн), -сăр(сĕр) формăсем падеж аффиксĕсем пулнине сирĕплетеççĕ те ĕнтĕ.

С. Угандеев «Коммунизм ялавĕ» хаçатра июлĕн 11-мĕшĕнче çырса кăларнă статьинче -шăн(шĕн) аффиксемлĕ япала ячĕсен падежĕ пуррине йышăнать, анчах тĕллев падежне пирки падежĕ тесе улăштарасшăн. Тĕрĕс мар. Пирке тени вырăс чĕлхинче причинăна пĕлтерет, ыйтăвĕсем те—«мĕн пирки? мĕншĕн?» (почему?) пулаççĕ. Тĕллев тени—цель, тенине пĕлтерет, ыйтăвĕсем те «мĕн тĕллевпе? каммăн? мĕншĕн?» (для кого? для чего?). «Эпир миршĕн кĕрешетпĕр» тени, ĕçе мĕн пирки е мĕншĕн (почему) тунине пĕлтерет-и вара? Кунта пирке пĕлтерĕшĕ çук, ĕçе мĕн тĕллевпе, мĕншĕн (для чего) туни çинчен сăмах пырать.

С. Угандеев çапла çырать: «Çуклăх падежне кĕртни кирлех мар пек. -Сăр, -сĕр аффиксем хушăнă сăмахсене палла ячĕсем çине е наречисем çине ямалла пулать».

Сăмах морфологилле категори çинчен пынă çĕртех С. Угандеев юлташ пĕр сăнталăсăрах синтаксисла категори çине куçать. «Ку вăл сыхăнуран килет», тесе хăварать.

Падеж морфологилле е синтаксисла категори-и?

Чăваш чĕлхинче чылай падежсене (аффикслă камăнлăх, пĕрлелĕх, вырăн, тухăу, тĕллев, çуклăх) морфологилле пĕлтерĕше кура (япала ячĕ сумне мĕнле аффикс хушăнни) уйăратпăр. Анчах ят, пару, аффиксăр камăнлăхпа аффиксăр тăву падежĕсене морфологилле пĕлтерĕше кура уйăрса илме çук, вĕсене сăмах майлашăвĕнче (синтаксисра) çеç уйăрса илме пулать. Вăрмансăр, çынсăр, урамсăр сăмахсене хăйне уйрăм илнипех ыйту пама пултаратпăр (камсăр? мĕнсĕр?), вĕсем мĕнле пĕлтерĕш тытса тăнине пĕлетпĕр (ĕç камсăр е мĕнсĕр пулни).

Çапла вара -сăр, -сĕр аффиксемлĕ япала ячĕсем, вĕсене уйрăм илсен, япалах çуклăх падежĕнче тăракан япала ячĕсем шутланаççĕ. Хăшпĕр сăмах майлашăвĕсенче илсен, вĕсем урăх пуплев пайĕ те пулма пултараççĕ, сăмахран, тепĕр япала ячĕ умĕнче тăнă чухне палăлă ятне туха каяççĕ: уйăхсăр кас. Вăхăта пĕлтерсе, «хăçанччен? хăçансăр?» ыйтусемпе ыйтăннă чухне вăхăт наречине тухса каяççĕ: çуркуннесĕр, ырансăр; мĕнлелĕхе пĕлтерсе, «мĕнле?» ыйтупа ыйтăннă чухне мĕнлелĕх наречине тухса каяс çуклă çинче тăраççĕ: билетсăр килтĕм, укçасăр илтĕм. Юлашки тĕслĕхсенче икĕ ыйту та пама пулать: мĕнле? мĕнсĕр? Вĕсем наречине тухса çитнĕ теме халлĕхе пултараймастпăр-ха.

С. Угандеев илсе кăтартнă тĕслĕхсенчен пĕри автор шухăшне тивĕçтереймест. «Силсĕр çанталăк пулчĕ» предложенире «силсĕр» сăмах морфологире палăлă ячĕ пулать тенине килĕшĕнĕр, анчах «халĕ тракторсăр сухаламастпăр» предложенире «тракторсăр» сăмах наречи пулать тейнпе ниăнпа май çук, вăл япала ячĕ пулать, унăн ыйтăвĕ те—«кимсĕр?» мар,—«мĕнсĕр?».

А. Иванов хăйĕн статьинче чăваш чĕлхин уйрăмлăхне çителĕклĕ тĕрĕн шута илме кирли çинчен нумай чарăнса тăрать. Çапах та хăй чăваш чĕлхин спецификине, унăн уйрăмлăхĕсене тĕплĕн шута илмен, ытти тĕрлĕ чĕлхесенче тĕп падеж термина йышăнни кура, чăваш чĕлхинчи аффиксăр мĕнпур падежсене пĕрлештерсе, вĕсене тĕп падеж ят парасшăн.

Чăваш чĕлхинче тĕп падеж туни теори енчен те, практикăпа методика енчен те тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен, пĕр енчен, сăмах пĕлтерĕшне хисепе илмесĕр, мĕн пурĕ те формăна кура çеç пĕр падежа пĕрлештеретпĕр, пĕрлештернĕ падежсем кашниех хăйсен уйрăм пĕлтерĕшĕсене сухатмаççĕ; тепĕр енчен, А. Иванов шухăшĕпе килĕшсен, вĕренекенсем подлежащипе дополнение уйăрса илеймн пулаççĕ, вĕсене пăтраштарма пуçлаççĕ. Тĕслĕхсем: сурăх тытнă кашкăр вăрмана кĕрсе кайрĕ; кашкăр тытнă сурăх сырмара выртать; кашкăр сурăх тытнă. Çак виçĕ предложенире 6 япала ячĕ, вĕсем пурте пĕр формăра тăраççĕ. Хăшĕ субъект, хăшĕ объект? Кунта ирĕксĕрех сăмах пĕлтерĕшне пăхма тата синтаксисран пулăшу ыйтма тивет.

В. В. Виноградов академик падежсем, тĕрлĕ пĕлтерĕш йышăнса, пурнăçри япаласемпе явленисем хушшинчи тĕрлĕ сыхăнусене: япала камăнлăхне, пространствăлăха, вăхăта, сăлтава, тĕллеве тата ыттисене те кăтартса, ӳссе пыни çинчен вĕрентет. Савăн пекех: «Предлогсемпе сыхăнса тăни падеж формин пĕлтерĕшне анлăлатать, пуянлатать», тесе çырать В. Виноградов «Русский язык» ятлă кĕнекинче (167 стр.).

А. Иванов падежсене кăскетет, улăштарать, пăсать. Ку вăл вырăнсăр япала.

А. Иванов малалла: «Чăваш чĕлхинче тăву падежĕ çук», тет. Чăваш чĕлхинче тăву падежне вырăссарăн кусарса çеç тăнатпăр имĕш. Савăнпа та вăл пару-тăву падежĕ тăвасшăн. Ăна икĕ тĕслĕхпе сирĕплетме пикенет: «бригадира каланă», «бригадира мухтанă».

Чăнах та, «бригадира мухтанă, каланă, саламланă, парнеленĕ, награда парне панă, салам каланă» пек тĕслĕхсенче япала ячĕ хăш падежра тăнине уйăрса илме йывăр. Анчах кун пек тĕслĕхсем сахал. Вĕсем пару е тăву падежĕсен тĕп пĕлтерĕшне кăтартмаççĕ.

Чăваш чĕлхи вĕрентĕвĕн историллĕ сук-вăрăмĕнче парупа тăву падежĕсем яланах пулнă. Çак икĕ падеж çинчен Н. И. Ашмарин профессор 1898 çулта çырса кăларнă «Материалы исследования чувашского языка» ĕçĕнче йĕнăш тунă пулнă, вĕсене пĕрлештернĕ, аффиксăр тăву падежне пачах асăрхамасăр иртнĕ пулнă. Анчах 1903 çулта çырса кăларнă тепĕр ĕçĕнче («Опыт исследования чувашского синтаксиса») Н. И. Ашмарин хăйĕн йăнăшне тӳрлетнĕ, вĕсем икĕ падеж пулнине нумай тĕслĕхсемпе сирĕплетнĕ.

Парупа тăву падежĕсем уйрăм падежсем пулнине В. Г. Егоровпа С. П. Горский профессорсем те хăйсен ĕçĕсенче сирĕплетеççĕ. Анчах А. Иванов вĕсене мĕн пурĕ те формăна кура çеç уйăрасшăн.

С. Угандеев вара, А. Иванова критиклес тесе, хăй те формализм çулĕ çине тăнă. «Пару падежĕнчи япала ячĕ кĕске формăра нихçан та лармасть», «выльăха», «трактора», «вăрмана» сăмахсем кĕске формăра ларман пирки пару падежĕнчи япала ячĕсем шутланаççĕ, тет С. Угандеев.

Çак асăннă япала ячĕсем тулли формăра çеç пулнă пирки мар, пару падежĕн пĕлтерĕшне тытса тăнă пирки пару падежĕнчи япала ячĕсем шутланаççĕ, мĕншĕн тесен, пĕр енчен, вĕсен морфологилле формине кура çеç хăш падеж пулнине палăртма май çук; тепĕр енчен, пару падежĕнче хăшпĕр чухне (халăх чĕлхинче) формăсăр япала ячĕсем те пулаççĕ: хула кайрăм, пасар кайрăм, мунча кĕтĕм. Савăнпа та формăна мала хурса тĕпчени— Иванов йăррине юрлайнех пулать.

Падежсен ыйтăвне С. Угандеев ытла та пăтраштарать, сăмахсем патне ыйтусем тĕрĕс мар лартать, япала ячĕ хăш падежра тăнине уйăрса илеймест. «Шоссе урлă», «çул тăрăх» тĕслĕхсене, «ăстан? ăста?» ыйтусем парса, пĕрне—туху, теприне вырăн падежĕнчи япала ячĕсем, тема пăхать. С. Угандеев майлă илсен, «Çулпа пыратăп» тĕслĕхе те, «ăсте?» ыйту парса, вырăн падежĕ теме пулать.

«Кĕмĕл сĕрĕ», «ылтăн сăлтăр», «пăхăр укçа» йышши сăмах сыхăнăвĕсенчи «кĕмĕл», «ылтăн», «пăхăр» сăмахсене, «мĕнле?» ыйту парса, паллă ячĕ тума пулать, тесе шутлать.

Стабильнăй учебник пĕр вăхăт çакăн пек пăхнăччĕ, анчах хăй йăнăшне палăртса тӳрлетрĕ, вĕсене япала ячĕ тесе пăхма пуçларĕ. Халĕ Угандеев юлташ киввине каялла таврасшăн.

Сăмахсене пĕри—морфологи енчен, тепри — семантика, виççĕмĕшĕ — синтаксис, тăваттăмăшĕ ыйту тăрăх çеç пăхма пуçласан, вара пирĕн грамматикăра 7 е 9 падеж çеç мар, шутласа кăларма çук нумай падеж тата тĕмĕн чухлĕ пуплев пайĕ пулса каять. Сăмаха пуплев пайĕ е падеж çине уйăрасси ыйту тăрăх çеç мар, унăн семантикăлла, морфологилле, синтаксисла пĕлтерĕшĕсене шута илнипе пулнине С. Угандеев пĕлме тивĕç ĕнтĕ.

А. Ивановпа С. Угандеев шухăшĕсем Наукăсен академийĕ 1953 çулта кăларнă «Вырăс чĕлхин грамматикине» хирĕçлеççĕ. «...падеж выражает, — тесе çырнă унта,—синтаксические функции существительного, устанавливая отношение существительного в данной его падежной форме к другим членам предложения».

Çапла ĕнтĕ Наукăсен академийĕ япала ятне падежсем çине уйăрнă чух сăмахăн содержанине (вăл синтаксисра тулли палăрать) формипчен (морфологирен) маларах хурса тĕпчеме сĕнет.

Çак правило чăваш чĕлхинче те хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнать. Ун тăрăх чăваш чĕлхинче тăхăр падеж уйăрма пулать: ят, камăнлăх, пару, тăву, пĕрлелĕх, вырăн, туху, тĕллев, çуклăх падежĕсем. Чăваш чĕлхинче тăхăр падеж туни — пуçран шутласа кăларнă шухăш мар. Вăл вырăс чĕлхи грамматикинчен куçарса туни те мар, шăпах ĕнтĕ чăваш чĕлхин шалти законĕсене, унăн спецификине тĕпчесе палăртни пулать те ĕнтĕ.

Юлашкинчен çакна каламалла. А. Иванов нумай ыйтусем тĕлĕшпе сӳтсе явма дискусси усрĕ. Ку дискуссие В. Г. Егоровпа С. П. Горский профессорсем, А. С. Канюковпа Р. И. Цыпкина тата ытти нумай чĕлхеçĕсем, учительсем хутшăнасçа, ку дискусси Марр ĕçĕсене вĕçне çитех пăрахăçлама, тавлашуллă ыйтусене анлăн сӳтсе явса таткерме, чăваш чĕлхи вĕрентĕвне марксистла-ленинла наука тăрăх анлăн аталантарма пулăшакан дискусси пулса тăрасса шанма пулнăччĕ. Анчах чĕлхеçĕсем хутшăнман пирки, сӳтсе явасси ытла та вăрах, лăпкă иртет.

В. ТЕРЕНТЬЕВ,
Вăрмар районĕнчи Арапуçĕнчи сичĕ çул вĕренмелли шкул учителĕ.

Паха та илемлĕ таварсем ытларах туса кăларар!

Çак кунсенче «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕнче Шупашкар хулинчи апат-çимĕçпе çăмăл промышленность предприятийĕсен руководителĕсемпе стахановецсем тĕл пулчĕç. Вĕсем халăха куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларас тата продукци пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе мĕн тума палăртни çинчен каласа пачĕç.

Çак страницăра эпир канашлура пулнă юлташсен сăмахĕсене кĕскетсе пичетлетпĕр.

Халăх валли—илемлĕ кĕпе-тумтир

А. РЫЧКОВА,
Ленин ячĕпе тăракан çĕлĕ фабрикин директорĕ.

Совет çыннин ыйтăвĕсем куллен ÿссе пыраççĕ. Унăн ыйтăвĕсене туллин тивĕçтересси — пирĕн пĕрремĕш тивĕç. Çак тивĕçе эпир мĕнле пурнăçласа пыратпăр-ха?

СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисем тата сессире Г. М. Маленков юлташ тухса каланă сăмах пирĕн фабрика коллективне ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарчĕç. Рабочисем продукци ытларах туса кăларма, унăн пахалăхне лайăхлатма пулчĕç. Уйрăм бригадăсем маларах илнĕ обязательствăсене пысăклатрĕç.

Фабрика коллективĕ юлашки вăхăтра ĕçри хăвăртлăха палăрмаллах ÿстерчĕ. Июль уйăхĕнчи производство планне 113,5 процент, иртнĕ уйăхри плана августăн 28-мĕшĕ тĕлне тултартăмăр. Калас пулать, фабрика кăçалхи пĕрремĕш çурçуллăхра продукци туса кăлармалли плана тултараймарĕ. Хамăрăн майсене тĕплĕн палăртнă хыççăн, эпир çав çитменлĕхе пĕтерме, çулталăкри плана тултарса çитерме пултăмăр. Халĕ эпир çав тĕллеве пурнăçласса çирĕп шанса тăратпăр.

Фабрикăри уйрăм бригадăсем хăйсен обязательствисемпе хăйсене паракан заданисене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Т. Иванова юлташ бригади арçынсем валли çăм пир-авăртан костюмсем çĕлет. Август уйăхĕнче 1.204 паха костюм çĕлесе, бригада уйăхри производство планне иртерсе тултарчĕ. Хĕрарăм кĕписем çĕлекен бригада (бригадирĕ З. Филиппова юлташ) плана 190 процент тултарчĕ. З. Лебедева юлташ бригади те иртнĕ уйăхра çитĕнÿсем турĕ.

Çак çитĕнÿсене тума мĕн пулăшрĕ-ха? Чи малтанах, фабрикăра юлашки вăхăтра чылай ĕçсене механизациленĕ. Сăмахран, ĕлĕкрех тÿмесене алăпа лартнă, пĕр тÿме лартма пĕр минут кирлĕ пулнă. Халĕ тÿме лартмалли машина пур. Машинăпа пĕр тÿме лартма виçĕ секунд çеç кирлĕ. Çапла вара, тÿмесене алăпа лартнă çĕрте тăватă çын ĕçленĕ пулсан, халĕ çав ĕçсене икĕ çын тăвать.

Кунсăр пуçне кăçал эпир ятарласа пурçăн кĕпесем çĕлемелли машинăсем, кĕпе вĕçне тĕрлĕрен пĕрмесем тума май паракан «ЗИГ-ЗАГ» йышши машинăсем илтĕмĕр. Çак çĕнĕ оборудованипе усă курни продукци пахалăхне лайăхлатма та, ĕç тухăçлăхне ÿстерме те май пачĕ. Халĕ эпир хĕрарăмсем валли илемлĕ кĕпесем çĕлеме пултаратпăр.

ЫЙТУ: Сирĕн фабрика туса кăларакан продукцие туяннисем кăмăллаççĕ-и? Вĕсем сирĕн кĕпе-тумтирсене хурлани пулман-и?

— Фабрика коллективĕ продукци пахалăхне лайăхлатассине хăйĕн чи пысăк тивĕçĕ вырăнне хурать. Чи лайăх продукци туса кăларакан бригада ятне илессишĕн социализмла ăмăрту сарăлнă. Çав чыслă ята илекен бригадăсен шучĕ уйăхран уйăха ÿссе пырать.

Анчах, техникăлла-контроль пайĕнчи работниксем тимсĕртерех пулнă пирки, хăшпĕр чухне çитменлĕхсем те палăраççĕ. Çĕлесе хатĕрленĕ тумтирсене тÿмесем лартмасăр парса янисем тата ытти çитменлĕхсем те пулкалаççĕ.

ЫЙТУ: Фабрикăра рабочисен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе ĕçсем мĕнле тăраççĕ?

— Продукци пахалăхне лайăхлатас тесен, паллах, рабочисен ĕç квалификацине ÿстерме тăрăшас пулать. Пирĕн техминимум кружокĕсем виççĕ пур, унта 33 çын вĕренет. Çак кунсенче 13 çын икĕ тĕрлĕ ĕç тума вĕренсе çитесçĕ. Рабочисен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе малашне пирĕн ытларах ĕçлемелле пулать.

Малалла продукци ассортиментне нумайлатасси çинчен кăштах калас пулать. Ку енĕпе эпир ĕççыннисен ыйтăвне туллин тивĕçтеретпĕр теме çук-ха. Çулталăк вĕçлениччен çĕнĕ фасонсем тăрăх костюмсем, пурçăн кĕпесем чылай çĕлемелле. Икĕ çĕнĕ фасон тăрăх кĕпесем çĕлеме тытăнтăмăр ĕнтĕ. Фабрика арçынсем валли запаслă воротниксемпе кĕпесем ытларах кăларма тăрăшать.

Продукци туса кăларасси ÿсет

М. КАМЕНЕЦКИЙ,
чăлха фабрикинчи пуçламăш парторганизаци секретарĕн заместителĕ.

Шупашкарти чăлха фабрикин коллективĕ СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисене тата Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăха куллен кирлĕ япаласем ытларах туса кăларас тĕлĕшпе палăртнă мероприятисене пĕр шухăш-кăмăлпа ырласа йышăнчĕ.

Партипе правительство лартнă задачăсене татса парас ĕçре пирĕн фабрика та самаях вырăн йышăнать. Фабрика продукци туса кăларассине тата унăн ассортиментне çултан-çулах ÿстерсе пырать. 1946 çулхипе танлаштарсан, 1953 çулта продукци туса кăларасси тăватă хут ÿснĕ. Çав вăхăтрах рабочисен йышĕ икĕ хут ÿснĕ. Çак ÿсĕм вăл çĕнĕ механизмсемпе усă курса ĕç тухăçлăхне ÿстернинчен килнĕ. 1953 çулта продукци ассортименчĕ нумайланчĕ. Сăмахран, ачасемпе хĕрарăмсем валли чăлха кунчине йăрăмлатса тата шуратса, ачасем валли тĕрлĕ тĕспе илемлетсе, арçынсем валли çĕр мамăк çиппипе пурçăн çиппи хутăштарса носкисем туса кăларма тытăннă. Çавăн пекех хĕрарăмсем валли пĕтĕрнĕ çиппрен носкисем туса кăларассине лайăхлатнă тата унăн ассортиментне нумайлатнă.

Продукци туса кăларассине тата унăн ассортиментне ÿстернипе пĕрлех фабрика пĕрремĕш сортлă продукци туса кăлармалли плана тăтăшах тултарса пырать.

СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисемпе паллашнă хыççăн, рабочисем производствăри кашни операцире продукци пахалăхне лайăхлатма обязательствăсем илчĕç. Фабрикăра социализмла ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Ăмăртура Вулих, Гурьева, Белая, Рябина, Коворинова коммунистсем, Вульф, Шуверова комсомолецсем малта пыраççĕ. Коммунистсем пурте тĕрĕслĕх производствăра ĕçлеççĕ. Стахановецсем хăйсен ĕçĕнчи паха опытпа çамрăк рабочисене паллаштараççĕ.

Фабрикăра ĕçе, тĕпрен илсен, механизацилесе çитерпĕ. Çулталăк пуçламăшĕнче икĕ системăллă автоматсем 25 вырнаçтарса лартнă.

Ĕçре ÿсĕмсемпе пĕрлех çитменлĕхсем пуррине те палăртмалла. Электроэнерги çителĕклĕ парса тăман пирки кăçалхи пĕрремĕшпе виççĕмĕш кварталсенче фабрика татти-сыпписĕр ĕçлеймерĕ. Çавна электростанци руководителĕсен тата хулари тивĕçлĕ организацисен шута илмелле.

Уйрăм рабочисем хушшинче дисциплина тивĕçлĕ вырăнта мар-ха. Хăшпĕр участоксенче техникăпа экономика кăтартăвĕсем çителĕксĕр. Фабрика продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли заданине пурнăçлаймарĕ.

Суту-илÿ организацийĕсем хăшпĕр йышши япаласен пахалăхĕ çителĕксĕр пулнăшăн пире тивĕçлипех ÿпкелешеççĕ.

— Суту-илÿ организацийĕсем кăна мар, тавар илекенсем те ÿпкелешеççĕ,— терĕ канашлăва хутшăннă Кудрявцев юлташ (Шупашкарти тир-сăран комбиначĕ). — Манăн хамăн ачасем пур. Ачасем валли туса кăларакан носкисен пÿçĕсем пысăк, кунчисем ансăр. Мĕнрен килет çав çитменлĕх?

— Чăн та, кунашкал çитменлĕхсем пулнă. Халĕ эпир çĕнĕ становсем илтĕмĕр. Ÿлĕмрен ачасем валли туса кăларакан носкисен тата пĕтĕм продукци пахалăхĕ лайăх пулмалла.

ЫЙТУ: Мĕншĕн магазинсенче час-часах тĕрлĕ виçеллĕ чăлха-носкисем тупса илме çук? Продавецсем час-часах чăлха виçи мĕнлине пĕлмеççĕ, этикетка çук, теççĕ.

— Этикеткăсăр пĕр мăшăр та кăларман. Тен, сорталанă чухне йăнăшнă пулĕ. Апла пулсан, ку ĕçе пирĕн ытларах тĕрĕслемелле пулать. Суту-илÿ организацийĕсем яланах пĕр пек виçеллĕ чăлха-носкисем ыйтаççĕ. Продукцие палăртнă ассортимент енĕпе пĕтĕмпех туса кăларнă пулсан та, тепĕр чухне кирлĕ виçеллĕ чăлха-носкисем магазинсенче пулманни палăрать. Пирĕн малашне ĕççыннисен ыйтăвĕсене тĕплĕрех пĕлмелле. Унсăрăн халăх ыйтăвне кирлĕ пек тивĕçтерме çук. Ку енчен, паянхи канашлу пит усăллă пулчĕ.

ЫЙТУ: Производство планне тултарассишĕн парторганизаци мĕнле кĕрешет?

— Парторганизаци производство ыйтăвĕсемпе куллен интересленет, парти пухăвĕсенче фабрика ĕçне лайăхлатасси çинчен час-часах сÿтсе яватпăр. Агитаторсем рабочисемпе тăтăшах калаçусем ирттереççĕ, хаçатсем вуласа параççĕ. Ĕç ăсталăхне ÿстермелли стахановла шкулсем пур, стахановецсем хăйсен опычĕпе ытти рабочисене паллаштараççĕ. Паллах, парторганизаци ĕçне малашне чылай лайăхлатма кирлĕ.

1953 çулхи плана палăртнă ассортимент енĕпе тултарас тата продукци пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе фабрика коллективĕ умĕнче пысăк та отвечатлă задача тăрать. Фабрика туса кăларакан продукци çирĕп те илемлĕ, куçа илĕртмелле пултăр тесе тăрăшмалла. Çакăн чухне кăна эпир партипе правительство халăх ыйтăвне тивĕçтерес тĕлĕшпе лартнă задачăна ăнăçлă пурнăçлама пултаратпăр.

Лайăх сăран тăватпăр

С. КУДРЯВЦЕВ,
тир-сăран комбиначĕнчи стахановец-закройщик.

Тир-сăран комбиначĕ производство планне тултарас тĕлĕшпе чылай вăхăт хушши юлса пычĕ. 1952 çулта вăл туса кăларнă атă-пушмака суту-илÿ организацийĕсем япăх хак панă тĕслĕхсем пулнă.

Кăçалхи июнь уйăхĕччен сăрана анилиновăй сăрăсемпе сăрлаттăмăр. Çав сăрăсем сулă тирсем çумне лайăх çыпăçмаççĕ, çавăнпа сăран илемлĕ пулаймастчĕ. Юлашки вăхăтра сăрана нитрокраска ятлă сăрăсемпе сăрлатпăр. Технологи процесне йĕркелени, мастерсем, бригадирсем хăйсен ответлăхне ÿстерни, продукци пахалăхне хăпартассишĕн социализмла ăмăртăва анлă сарни паха результатсем пачĕç. Халĕ комбинат паха сăран туса кăларать.

Кăçалхи февраль уйăхĕнче çĕршыври хут купăс тăвакан фабрикăсем валли «лайка» ятлă сăран туса кăларма тытăнтăмăр. Завод коллективĕ çĕнĕ йышши продукци туса кăларма лайăх хăнăхса çитрĕ. Комбинат туса кăларакан сăрана мухтаççĕ.

Халĕ комбинат чуяк, ача-пăча валли атă-пушмак, алса тулĕ çĕлесе кăларать, производство планне ăнăçлă пурнăçласа пырать. Сăран пултуша сахал уйăрса пани паха чувяксем ытларах туса кăларма чăрмантарать. Çавăнпа коллектив пултуша комбинатра туса кăларма палăртрĕ. Соковарна лартма проект çырса хатĕрленĕ, анчах Чăваш АССР Вырăнти тата топливо промышленность министерстви соковарна лартма комбината укçа-тенкĕ уйăрса памасть.

Пуçарулла коллектив

А. БОЧКОВ,
арман комбиначĕн директорĕ.

Революциччен Шупашкарта вутлă арман пулман. 1927 çулта вутпа ĕçлекен икĕ чулла арман лартнă. 1948 çултанпа вальцовăй станокпа ĕçлекен, шурă çăнăх авăртакан арман ĕçлет. Унччен Шупашкара шурă çăнăх ытти çĕртен кÿрсе килнĕ. Çĕнĕ арман 85 процентлă, 72 процентлă, 77 процентлă çăнăх авăртать, пăрса, сĕлĕ, пăри, урпа кĕрпи тăвать; соя çăнăхĕ авăртать. Икĕ çул каярах талăкра вăтам шутпа 40 тонна çăнăх авăртнă. Техникăна алла илни, рабочисен пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ ÿсни талăкра 60—75 тонна таран çăнăх авăртма май туса пачĕç.

СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕ йышăннă решенисемпе хавхаланса, чылай бригадăсем нормăна куллен 140—160 процент таран тултараççĕ, паха продукци çеç параççĕ.

Ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланнине, культури пĕрмай ÿснине шута илсе, комбинат сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа пахарах çăнăх авăртса кăларма тытăнчĕ. Унччен 100 килограмм тыррăн 97.5 килограмм ахаль çăнăх кăларнă пулсан, халĕ 95 килограмм çеç кăларатпăр. Шурă çăнăх пахалăхне те ÿстерпĕ. Çăнăх пахалăхне комбинатри лабораторипе Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность министерстви çумĕнчи лаборатори тăтăшах тĕпчесе тăраççĕ, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшаççĕ.

Комбинат коллективĕ çулталăкри планран иртерсе 15 процент çăнăх ытларах авăртса кăларма, продукци пахалăхне лайăхлатса пыма сăмах пачĕ.

Хĕрлĕ ялав илтĕмĕр

В. ТАЗОВА,
макарон фабрикин главнăй инженерĕ.

Макарон фабрики продукци туса кăлармалли плана уйăхран уйăха ăнăçлă тултарса пырать, продукци пахалăхне лайăхлатать. Фабрика коллективĕ уйрăмах иккĕмĕш кварталта паха тĕслĕхсем кăтартрĕ, плана пур кăтартусем тăрăх та ăнăçлă тултарчĕ. Çавна палăртса, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсовет фабрикăна хăйсен куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне пачĕç.

Фабрика коллективĕ тунă çитĕнÿсемпе çăлланса лармасть, шалти резервсемпе туллинрех усă курма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме тăрăшать. Партипе правительство кăтартса панă задачăсене пурнăçлама пулăшас тесе, рабочисемпе служащисем виççĕмĕш кварталти планран иртерсе 150 тонна макарон, лапша тата ытти апат-çимĕç туса кăларма, продукци ассортиментне нумайлатма социализмла обязательство йышăнчĕç.

Коллектив хăйĕн сăмахне чыслăн пурнăçласа пырать. Август уйăхĕнче продукци туса кăлармалли плана фабрика 108 процент тултарчĕ. Çав уйăхра та вăл тухăçлă ĕçлет.

Фабрика макарон типĕтмелли çĕнĕ цех уçма хатĕрленет. Ун валли çĕнĕ оборудовани кÿрсе килнĕ.

Фабрика коллективĕ халиччен пулман хастарлăхпа ĕçлет, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсовечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллинчех хăварассишĕн кĕрешет.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕнчи тĕлпулăва хутшăннă юлташсем (сулахайран сылтăмалла): И. О. Ефремов, Ю. Т. Ефремова, А. А. Бочков, М. О. Каменецкий, С. М. Кудрявцев, В. А. Анисимов, С. П. Антонов, А. И. Рычкова, А. А. Вишневская, А. В. Горбунова, Е. П. Гриднева.
Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Вырăнти чĕртаварпа усă куратпăр

И. ЕФРЕМОВ,
хулари апат-çимĕç комбиначĕн директорĕ.

Хулари апат-çимĕç комбиначĕ 1946-мĕш çултанпа ĕçлет. Çав çул вăл пурĕ 200 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Комбинат çултан-çул ÿссе пысăкланать. Юлашки вăхăтра çĕнĕ цехсем уçнă, чылай ĕçсене механизациленĕ. Ĕç тухăçлăхĕ пĕрмаях ÿсет. Çавна пула кăçалхи саккăр уйăх хушшинче 3,4 миллион тенкĕлĕх ытла, урăхла каласан, 1946-мĕш çулхинчен, темиçе хут нумайрах апат-çимĕç туса кăларнă.

Пирĕн коллектив вырăнти чĕртаварпа ытларах усă курма тăрăшать. Атăл леш енчи вăрманта хăмла çырли, хурлăхан, хура çырла, кĕтмел, шур çырли тата ытти йышши çырласем сулсерен нумай пулаççĕ. Кăçал 140 центнер хăмла çырли, 80 центнер ытти çырла хатĕрлерĕмĕр. Çав çырласенчен варени, джем, повидло тата ытти чылай апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларатпăр. Ĕççыннисен ыйтăвне шута илсе, хурлăхан çырлинчен варени ытларах пĕçерме тăрăшатпăр. Хурлăханра витаминсем питĕ нумай. Çавăнпа унран пĕçернĕ варени усăллă. Унсăр пуçне тата çак варени тутлă шăршăллă. 1952 çулта 60 центнер шур çырли хатĕрленĕччĕ. Çак çырларан туса кăларакан морс тата кĕселе ĕççыннисем кăмăллаççĕ. Çавăнпа кăçал тата ытларах шур çырли хатĕрлеме палăртрăмăр.

Халĕ кăмпа хатĕрлетпĕр. 15 центнер кăрăç кăмпи тăварларăмăр. Кăçал кăмпа сахал мар. Вуншар центнер пухса тăварлама шутлатпăр.

Юлашки çулсенче колхозсем садсем чылай ĕрчетрĕç, пахча çимĕç ытларах лартса туса тытăнчĕç, утарсем организацилерĕç. Эпир колхозсемпе тачă çыхăну тытатпăр. Колхозсем улма-çырла, пахча çимĕç, пыл сутаççĕ, комбинат вĕсене, укçа тÿленисĕр пуçне, вылăх апачĕ чылай парать. Вуншар тонна пахча çимĕç, чылай пыл туянтăмăр.

Партин Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви кăларса тăратнă задачăсене чыслăн пурнăçлас тесе, комбинат коллективĕ чылай çĕнĕ ĕçсем туса ирттерчĕ. Апат-çимĕç продукчĕсен ассортиментне нумайлатма, продукци пахалăхне лайăхлатма палăртрĕ. Юлашки вăхăтра çĕнĕ йышши печени, кекс пĕçерсе кăларма тытăнтăмăр. Пыл хушса пĕçернĕ «московски», «тульски» ятлă премĕксене ача-пăчасем çеç мар, ваттисем те юратаççĕ.

Тĕрлĕ уявсем ирттернĕ вăхăтра ĕççыннисем торт пĕçерсе пама заказсем параççĕ. Эпир вĕсен заказĕсене пурнăçлама тăрăшатпăр.

Тăварланă пахча çимĕçсене, ĕçмелли тата хăвăрт пăсăлакан япаласене упрама нÿхреп тăватпăр. Хăшпĕр йывăр ĕçсене механизацилерĕмĕр.

Комбинат коллективĕ çулталăкри производство планне срокчен тултарма, продукци пахалăхне лайăхлатма социализмла обязательство йышăнчĕ. И. Тимошкина, З. Горланова, Р. Бонкина юлташсем ертсе пыракан бригадăсем пĕрмаях тухăçлă ĕçлеççĕ, пысăк пахалăхлă продукци туса кăлараççĕ.

Пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар-ха, йывăрлăхсем те тĕл пулаççĕ. Чылай йывăр ĕçсене механизацилемен. Чăваш АССР Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность министерстви комбината механизмсем ытларах уйăрса пама тăрăшмасть. Йывăр ĕçсене механизацилеме кирлĕ пек пулăшмасть. Утар организацилеме палăртрăмăр. Шупашкарти вăрман хуçалăхĕ умне утар валли вырăн уйăрса пама ыйту лартрăмăр. Вăл çак ыйтăва татса памарĕ-ха.

Ĕççыннисен йăла ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерер

С. ДМИТРИЕВ,
«Металлист» промартель председателĕ.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ вырăнти промышленноçпа промысла кооперацин предприятийĕсенче куллен кирлĕ таварсем, килте тата хуçалăхра усă курмалли япаласем, строительство материалĕсем туса кăларассине чылай сарма палăртрĕ. Артель членĕсем съезд решенийĕсене чыслă пурнăçлассишĕн, ĕççыннисен йăла ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерессишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешеççĕ.

Артель ĕççыннисем валли алюминирен шăратса тата тимĕртен чылай савăт-сапа тăвать. Кунсăр пуçне артель чугунтан кăмака юшкисем, плитасем, çатмасем шăратса кăларать, металран тĕрлĕ йышши япаласем тăвать.

Ĕççыннисен йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесе, кăçалхи январь уйăхĕнче ятарласа металран тунă япаласене юсамалли павильон уçрăмăр. Унта кирек мĕнле йышши сехетсене, примуссене, велосипедсене, çĕвĕ машинисене, аш-какай турамалли машинăсене те юсаççĕ. Кирлĕ пулсан, тĕрлĕ инструментсене юсаса хăйраççĕ.

Павильонта ĕçлекенсем пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тăвассишĕн, заказсене вăхăтра пурнăçлассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Уйрăмах сехетсем юсакан мастер Баштанов юлташ паха тĕслĕхсем кăтартнине палăртас пулать. Вăл иртнĕ уйăхри ĕç нормине 150 процент пурнăçларĕ, сехетсене пурне те вăхăтра тата паха юсарĕ.

Павильон производство планне июль уйăхĕнче 102,6 процент, август уйăхĕнче 177,6 процент тултарчĕ.

Кăçалхи план тăрăх артелĕн цинкланă тимĕртен савăт-сапа туса кăларакан цех уçмалла. Ун валли оборудовани кÿрсе килнĕ, халĕ цех çуртне тăваççĕ.



Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн коллективĕ савăнăçлă кунсенче пурăнать. Кĕтнĕ кун çитрĕ: комбинатра пир-авăр тĕртсе кăларма тытăнчĕç. Рабочисем çĕнĕ машинисемпе ĕçлеме хăнăхса пыраççĕ. Вĕсенчен пĕри—Е. Коваленкова юлташ — сатин тĕртет.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Е. Коваленкова юлташ станок патĕнче.
Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Çĕнĕлле ĕçлеме тытăнтăмăр

А. АЛЕКСЕЕВ,
хулари промкомбинат директорĕ.

Промкомбинат сулсерен çăматă чылай туса кăларать. Ĕççыннисем, çавăн пекех суту-илÿ организацийĕсем, пирĕн продукцине хурламаççĕ. Анчах коллектив унпа çăлланса ларма пултараймасть. Хальхи тапхăр тата тимлĕрех ĕçлеме хушать. Çакна асра тытса, эпир çăматă тата çĕвĕ изделийĕсен пахалăхне лайăхлатма пулăшакан организацилле-техникăлла мероприятисен планне туса хатĕрлерĕмĕр.

Çăматă пахалăхĕ çăм таса, оборудовани юсавлă пулнинчен, сăрлана чухне температура режимне тĕрĕс тытнинчен, технологи дисциплинине çирĕп пурнăçласа пынинчен килет. Организацилле-техникăлла мероприятисен планĕ асăннă условисене çирĕп пурнăçласа пыма, руководительсен ответлăхне ÿстерме пулăшать. Цех начальникĕсемпе мастерсен государство стандарчĕсене лайăх пĕлмелле, рабочисен квалификацине хăпартма тăрăшмалла.

Халиччен çăматăсене сăрлас, тусантан тасатас, кунчисене тикĕс касас, клеме лартас ĕç çине тимлĕн пăхман. Çавăн пирки паха çăматăсемех ĕççыннисен кăмăлне кайман. Эпир çак çитменлĕхе пĕтерме палăртрăмăр. Çăматă тасатакансем тата йышăнакансем патĕнче государство стандарчĕ тăрăх туса кăларнă тата çирĕплетнĕ изделисен тĕслĕхĕсем пулаççĕ.

Çĕвĕ цехĕ енĕпе те чылай çĕнĕ ĕçсем туса ирттеретпĕр. Тумтир тата кĕпесем çĕлемелли материалсене Горький хулинчи модельсен çурчĕ сĕннĕ шаблонсем тăрăх çеç касаççĕ. Ĕççыннисем çĕлеме заказ панă чухне фасонсемпе паллашаççĕ, хăйне фасонĕ кăмăла кайни çинчен квитанцисем çинче паллă тăваççĕ.

Продукци пахалăхне хăпартасси рабочисен квалификацинчен нумай килет. Çавăнпа кашни рабочие техминимума вĕрентетпĕр, занятисем ирттерме ытти фабрикăсенче ĕçлекен ăста специалистсене хутшăнтаратпăр. Продукци пахалăхне палăртма тата заказсене мĕнле пурнăçланине тишкерсе тухма кашни уйăхра икĕ хутран кая мар общественăлла смотрсем ирттеретпĕр.

Йывăр ĕçсене механизациленĕ

С. АНТОНОВ,
çăкăр комбиначĕн главнăй инженерĕ.

Ĕççыннисем валли апат-çимĕç продукчĕсем çителĕклĕ таран туса кăларасси вăл — пирĕн умра тăракан тĕп задача. Вăрçă хыççăнхи çулсенче çăкăр комбиначĕ чылай ÿсрĕ. Комбинатри 2-мĕш номерлĕ çăкăр завочĕ талăкра ултă тонна кăна продукци кăларнă пулсан, халĕ талăкра 45 тонна çăкăр пĕçерсе кăларма пулать. Кунта йывăр ĕçсене пурне те механизациленĕ.

Комбинат çăкăр нумай пĕçерет, булкăсем, сушкăсем, батонсем тата ытти тĕрлĕрен апат-çимĕç сахал кăларать. Çакă вăл условисем япăххинчен килет. Продукцин ассортименчĕ те пысăк мар. 85 тĕрлĕ издели кăлармалла пулсан, 51 тĕрлĕ издели çеç тăватпăр. Ĕççыннисен ыйтăвĕсене çителĕклĕ тивĕçтерейместпĕр.

Комбинат коллективĕ продукци ытларах туса кăларассишĕн, пахалăхне лайăхлатассишĕн тăрăшса ĕçлет. Халĕ цехсене юсаççĕ. Производство çурчĕсене пăспа ăшăтмалла тăватпăр, электричество линийĕсене çĕнĕлле йĕркелетпĕр, çăкăр пĕçермелли кăмакăсене юсатпăр. Сосновкăри, Атăл леш енчи торф предприятийĕнчи пекарньăсен кăмакисене çĕнĕрен тума палăртнă.

Апат-çимĕç продукчĕсене ытларах туса кăларас тĕлĕшпе пир-авăр комбиначĕнчи çăкăр завочĕ вăхăтра ĕçе яни пысăк пулать. Çак завод талăкра 30 тонна çăкăр пĕçерсе кăлармалла.

Кунсăр пуçне хулара тепĕр çăкăр завочĕ тума палăртнă.

Хĕвеланăç Германире фашистла йĕркесем тăваççĕ

Хĕвеланăç Германире çавăн пек ĕç пулса иртни çинчен каласа параççĕ. Пĕррехинче Мюнхенри учреждение çын пырса кĕнĕ. Сурта кĕрсенех вăл унти чиновниксене çапла саламланă: «Хайль Гитлер!», тенĕ. Тĕлĕннĕ пек пулнă чиновниксем ăна çапла асăрхаттарнă:

— Ырă кăмăллă çын! Эсир пĕлместĕрни вара, халĕ ун пек саламламаççĕ, урăхла саламлаççĕ вĕт?

Кун пек калани хирĕç çавăн пек ответ илтĕннĕ:

— Анчах сире, господинсем, урăх çынсемпе улăштарман вĕт. Ĕлĕкхи çынсен çăнĕсем мана ĕлĕкхи сăмахсене аса илтереççĕ!..

Çавăн пек калаçу пулни Бонн государствинчи йĕркесене тĕрĕс кăтартса парать.

Ун пек калаçу пулмалли сăлтавсем Хĕвеланăç Германире çителĕклех. Вăрçă хыççăнхи саккăр çул хушшинче кунта, хĕвеланăçĕнчи оккупаци влаçĕсем хӳтĕленипе, çав тери реакциллĕ йĕрке туса хунă, гитлерла вăрă-хурахсене çĕнĕрен ашкăнма çул уçса параççĕ. Нацизма тата милитаризма пĕтересси çинчен йышăннă историллĕ решенисене пăрахăçа кăларса, хĕвеланăçĕнчи державăсем пиннер активлă нацистсене ирĕке кăларнă. Нимĕç халăхĕн малта пыракан вăйĕсене хĕсĕрлесе пыраççĕ, çав вăхăтрах уççăн тата вăрттăн ĕçлекен гитлеровецсене политикăлла ĕçсем тума çул уçса панă. Вĕсен пулăшнипе империалистла политикансем нимĕç халăхне çĕнĕрен минретме, Хĕвеланăç Германие Совет Союзне хирĕç тăракан вăрçă блокĕсене кĕртме ĕмĕтленеççĕ.

* * *

Вăрçă хыççăнхи малтанхи çулсенче хĕвеланăçĕнчи оккупаци влаçĕсен, хăйсен çĕршывĕсенчи обществăлла вăйсем хĕснипе пула, «виççĕмĕш рейхăн» нумай пуçлăхĕсене ирĕксĕрех арестлесе суда пама тивнĕ. Тĕнчери общественность нумай приговорсем ним сăлтавсăр çемçе пулни çинчен ун чухнех асăрхаттарнăччĕ. Анчах та çав приговорсем те хут çинче кăна тăрса юлчĕç.

Чи малтан Гитлер генералĕсене ирĕке кăларчĕç, вĕсене Америкăри çар çыннисем хăйсем тăвакан «Европа çарĕн» шанчăклăрах союзникĕсем тесе шутлаççĕ. Акă, тĕрмерен гитлерла фельдмаршала Манштейна кăларнă, ăна Украинăра тата Крымра совет гражданĕсене тискеррĕн вĕлернĕшĕн 18 çул хушши тĕрмере хупса усрамалла тунă пулнă. Италире тискер ĕçсем тунăшăн персе вĕлермелле тунă Кессельринг фельдмаршала, Балкан çĕршывĕсенчи халăха асаплантарнăшăн ĕмĕрлĕхех хупса лартмалла тунă Лист фельдмаршала та ирĕке кăларнă. Вĕсем хыççăн пĕчĕкрех чинлă, анчах та вăрă-хурахла ĕçсем тăвас тĕлĕшпе пĕрре те кайра тăман вуншар генерал ирĕке тухнă. Вĕсем хушшинче: Макензен, Галленкамп, Андре, Фалькенхорст, Ланц, Велер, Рамке генералсем. Вĕсем пурте Европăри халăхсен палачĕсем пулнă.

Гитлерла государствăн ытти вăрă-хурахĕсене те ирĕке кăларнă. Сăмахран, тупă королĕ Крупп тата унăн вăрçă концернĕн çичĕ директорĕ ирĕкре, «ИГ Фарбениндустри» ятлă хими трестĕн директорĕсене пурне те, çавăн пекех Гитлерăн чи çывăх çыннине Фридрих Флик промышленника та ирĕке кăларнă. Министрсем пулнă Дарре тата Шверин-Крозигк, Гитлер кабинечĕн статс-секретарĕсем пулнă Кепплер, Шлегельбергер тата ытти нацистла деятельсем те ирĕкре пурăнаççĕ. Вĕсем хăйсене хупса усрамалла тунă срокăн çуррине те тĕрмере ларман.

Хĕвеланăçĕнчи оккупаци влаçĕсем эсэсовецла вăрă-хурахсен кĕтĕвне ирĕке кăларса яраççĕ. Акă, СС войскисен генералне Вальдека 1950 çултах ирĕке кăларнă. Ун хыççăн, вăрçă вăхăтĕнче оккупациленĕ Данире гестапо начальникĕ пулнă Гофман, обергруппенфюрер Франк тата вуншар эсэсовецсем ирĕке тухнă. Гитлерла вуншар гаулейтер тата министр ирĕкре пурăнаççĕ, вĕсенчен нумайăшне Бонн влаçĕсем уççăнах пулăшаççĕ. Акă, Совет Прибалтикинчи халăхсен палачĕ пулнă Лозе гаулейтер, Гитлер вăхăтĕнче почта министрĕ пулнă Онезорге пенси илеççĕ. Бонн влаçĕсем эсэсовецсен обербандичĕн Гейдрихăн арăмне те пособи памалла тунă.

Ирĕке тухнă нацистла преступниксем хăйсен хура ĕçне активлăн тума тытăннă. Бонн государствинче вĕсем валли ăшă вырăнсем сахал мар тупăннă. Кессельринг фельдмаршал «Хурçă шлем» ятлă реваншистла союза ертсе пыма тытăннă. Андре генерал неофашистла «нимĕççен импери партийĕн» ертсе пыраканĕ пулса тăнă, гитлерла çарта парашютистсем пулнисен союзне Рамке ертсе пырать. Çакна палăртмалла: хăйне ирĕке кăларнă хыççăн Манштейн фельдмаршал çийĕнчех Бонн канцлерĕ Аденауэр патĕнче йышăнура пулнă.

Ирĕке кăларса янă гитлеровецсем хĕвеланăçĕнчи оккупаци влаçĕсен хӳттинче пурăннă ытти нацистсемпе пĕр каварлă пулса ĕçлеме тытăннă. Çав господинсем пурте халĕ Бонн правительствин аппаратĕнче пысăк вырăнсенче лараççĕ. Акă, Копф—Анатри Саксони çĕрĕн премьер-министрĕ, вăл вăрçă преступникĕ, ăна Польша хăй аллине тытса пама ыйтать. Бонн правительствин шалти ĕçсен министрĕ Роберт Лер—тахçантанпах нацист, вăл бундестаг трибуни çинчен уççăнах «нацизма пĕлĕмĕн хут» илсе ларма пулăшу пама хатĕр, тесе пĕлтернĕ. Юстици министрĕ Делер—хăй гитлеровец пулнине пытарса тăман çын, вăл вăрçă преступникĕсене пурне те айăпран хăтарма хушать. Сул-йĕр министрĕ Зеебом—чăрсăр реваншист. Нацистсен çав мĕнпур канцĕсене Бонн канцлерĕ Аденауэр—Рур магначĕсен лартнăскер, Муссолинине пуççапса пурăннă çын, Герингăн чи çывăх тусĕ ертсе пырать.

Хĕвеланăç Германири ертсе пыракан буржуалла партисем халĕ хăйсен политики тĕлĕшпе «виççĕмĕш рейх» такăрлатнă çулпа пыраççĕ. Ку партисене ертсе пыракан вырăнсене те çав нацистсемех лараççĕ. Акă, Бонн коалицине кĕрекен «демократиллĕ ирĕк партин» суйлав умĕнхи программин авторĕ ирсĕр Геббельсăн радиокомментаторĕ Ганс Фриче пулса тăрать, фашистсен пуçлăхĕсене суд тунă чухне вăл Нюрнбергра пĕтĕм тĕнчери трибуналăн айăпписен саккан çинче ларнă. Çакна аса илни вырăнлă: «Демократиллĕ ирĕк парти» членĕнче Бонн республикин президенчĕ Теодор Хейс та тăрать. Нацистсем «нимĕççен» партийĕ текенскерĕн парти бюровĕнче те туллиех.

Хĕвеланăç Германийĕн обществăлла пурнăçне нацистсем пусмăрласа тăнине реакциллĕ пичетĕн те ирĕксĕрех йышăнма тивет. Сăмахран, Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи монополи ушкăнĕсен «Бизнес уик» ятлă журналĕ, Бонри шухăш-кăмăла палăртса, çапла çырнă: «Халиччен паллă нацистсем пулнă çынсем каллех государствăн аслă вырăнĕсене кĕрсе вырнаççĕ», тенĕ.

* * *

Фашистла элементсем Бонн государствин правительствăпа парти органĕсене кĕрсе ларнипех лăпланмаççĕ, вĕсем хăйсен организацийĕсене те тăваççĕ. Нацистла вăйсене çавăн пек пĕтĕçтересси тĕрлĕ майсемпе пулса пырать.

Бонн государствинче нацизмĕ кăмăллакан политикăлла партисемпе ушкăнсем халĕ уççăнах ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен активлăхне уйрăмах халĕ вăйлататççĕ, мĕншĕн тесен 1953 çулхи сентябрĕн пуçламăшĕнче бундестаг суйлавĕ пулса иртет. Хĕвеланăç Германире «нимĕççен импери партийĕ», «нимĕç блокĕ», «нимĕççен государство партийĕ», «пĕтĕмĕшле Германи блокĕ» ятлă фашистла ушкăнсем т. ыт. те уççăнах ĕçлесе тăраççĕ. Çав организацисем мĕнле ĕç тунине «нимĕççен обществин» пĕр программăлла заявленийĕнченех аван курма пулать, çав программăра «Гитлер правленийĕн системине» ырланă. «Нимĕç блокĕн» пуçлăхĕ Мейсснер фашист тĕрмере ларакан Дениц гросс-адмирала пур майпа та ырлать. Акă мĕн палăртмалла: çак мĕнпур асăннă фашистла ушкăнсем нумаях пулмасть Мюнхенра хăйсен «имперски съездне» иртернĕ. Унта вĕсем нацистла «нимĕççен пĕрлешĕвне» тума йышăннă.

Бундестага суйлама ирсĕр нацистсене кандидата тăратаççĕ. Вĕсен шутне Гитлерăн статс-секретарĕ пулнă Науман, «Гросдейчланд» дивизийĕн командирĕ пулнă Мантейфель генерал, Крит утравĕ çинчи халăхсен палачĕ Андре генерал кĕреççĕ. Парламента суйлама çав çынсене кандидата тăратни те ĕнтĕ Хĕвеланăç Германире нацизм мĕн тери вăйланнине лайăх кăтартса парать.

Уççăн ĕçлекен фашистла организацисемпе пĕр вăхăтрах, Бонн государствинче вăрттăн ĕçлекен нацистла ушкăнсем те нумай туса хунă, вĕсем терорла, диверсиллĕ тата шпионла ĕçсем тăваççĕ. Вĕсене хĕвеланăçĕнчи оккупаци влаçĕсем пулăшаççĕ. Иртнĕ кĕркунне «нимĕç çамрăкĕсен техникăлла службăн союзĕ» текенскерне тăрă шыв çине кăларнине пĕтĕм Германи пĕлчĕ, ку союз—вăрттăн ĕçлекен организацисенчен пĕри. Ăна Америкăн оккупаци влаçĕсем укçа парса тăнă, Америка чиновникĕ Гарвуд ертсе пынă. Ку организацинче тăракан диверсантсене Мюнхен çывăхĕнчи Америка полигонĕсенче вĕрентсе хатĕрленĕ.

Çавăн йышши вăрттăн организацисене Хĕвеланăç Германире тĕрлĕ ятсем панă. Сăмахран, вĕсем хушшинче «нимĕççен тăван çĕршыв оборони», «социальнăй проблемăсене тĕпчесе пĕлмелли бюро», «Гелен генерал бюровĕ» ятлисем пур. Юлашкинчен асăннă бюро кăна Америкăран тĕрлĕ майпа çулталăкра 3,5 миллион доллар илсе тăрать, миллионсен çав центрне гитлерла разведчик Гелен ертсе пырать.

«Гаулейтерсен кружокĕ» текен вăрттăн организаци хăйĕн ирсĕр сăннисене пĕтĕм Хĕвеланăç Германие сарнă, унăн пуçĕнче маларах асăннă Науман тăрать. Вăл Бонн партийĕсемпе тата учрежденийĕсемпе пурине те çирĕп çыхăну тытать. Наумана Америка [illegible] хӳтĕлеççĕ. Англи влаçĕсем «гаулейтерсен кружокĕн» каварне тупса палăртнă пулнă, вĕсем унăн пуçлăхне хăвăртрах нимĕç органĕсене пама васканă, нимĕç органĕсем вара Гитлер статс-секретарĕ пулнăскерне ирĕке кăларса янă.

Ют çĕршывсене тара кĕрĕшнĕ вăрă-хурахсем июнĕн 17-мĕшĕнче Берлинра империалистла авантюра туса пăхрĕç. Ку вăл вăрттăн ĕçлекен фашистла центрсенче «кадрсене» мĕн тума хатĕрленине кăтартса пачĕ. Çав кун Америка офицерĕсем панă команда тăрăх «нимĕç çамрăкĕсен союзĕнчи», «нимĕç блокĕнчи» тата ытти организацисенчи бандитсемпе çын вĕлерекенсене Хĕвелтухăçĕнчи Берлин урамĕсенче пушарсем кăларма, çынсене вĕлерме, Демократиллĕ Германи Республикине хирĕç провокацисем тума янă.

* * *

Хĕвеланăç Германире фашистла йĕркесем тунипе Хĕвеланăç Германи халăхне пăшăрхантарать, кунти халăх ку ирсĕр ĕçе хирĕç тăрать. Гитлеровецсем хуçаланса пурăннă хăрушă çулсене лайăх астăвакан простой çынсем халиччен «виççĕмĕш рейхра» алкаснă путсĕр этемсем государствăна ертсе пыракан вырăнсене çĕнĕрен ларнине хумханса асăрхаса тăраççĕ.

Ĕçсыннисем çакна ăнланса пыраççĕ ĕнтĕ: 1945 çулхи май кунĕсенче нимĕç халăхĕ гитлерла ирсĕрсенчен хăтăлнăччĕ. Анчах хĕвеланăçĕнчи оккупаци влаçĕсем çав вăрă-хурахсене каллех влаçа лартаççĕ. Нацистсен пропагандисчĕсем милитаристла, реваншистла шухăшсем сарнине хирĕç ĕçсыннисем кĕрешеççĕ, çак кĕрешӳ вăйланса пырать. Кăçалхи июль уйăхĕнче Майн çинчи Франкфуртри ĕçсыннисем нацистсен пухăвне салатса янă, кунта вăрçă преступникĕ Андре генерал сăмах калана пулнă. Аденауэр ушкăнĕ тăвакан фашистла «йĕркесем» халăх массисем хирĕç тăни çине пырса çапăнаççĕ.

Нацистла вăйсем активизациленнĕшĕн буржуазин хăшпĕр ушкăнĕсем хăйсем те пăшăрханаççĕ, ăна вĕсем пытарма пултараймаççĕ. Штутгартри буржуалла хаçат «Алльгемейне цейтунг»: «Хĕвеланăç Германире реакци пысăк хăвăртлăхсемпе малалла кайса пырать», тесе палăртнă.

Хĕвеланăç Германири малта пыракан ĕçсыннисем Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, террора тата хĕсĕрленине пăхмасăрах, нацистсене тата вĕсене хӳтĕлекенсене хирĕç активлăн кĕрешеççĕ. Ку кĕрешӳре вĕсене гитлеровецсем пуç пулса тăнине ĕмĕрлĕхех пĕтернĕ Демократиллĕ Германи Республикинчи пĕтĕм халăх пулăшать. Нимĕç халăхĕн малта пыракан вăйĕсем пĕрлĕхлĕ пулса кĕрешнин тĕллевĕ çакă пулать: Германие пĕрлĕхлĕ, демократиллĕ государство туса хумалла, ку государствăра гитлерла вăрă-хурахсем валли вырăн пулмалла мар. Бонн бундестагне суйлама хатĕрленсе, Германири Коммунистсен партийĕ политикăлла пурнăçа тĕппĕрен демократизацилессишĕн, Хĕвеланăç Германие нацистла авантюристсенчен хăтарассишĕн кĕрешет. Суйлав программинче çапла каланă: Германири Коммунистсен партийĕ «фашистла тата милитаристла организацисене татăклăн çаварлăхлама, вĕсен ĕçĕсене чарса лартма хушать». «Фашистсене, çавăн пекех расизма пропагандăлакансене тата халăхсем хушшинче курайманлăх саракансене государствăн ертсе пыракан органĕсенчен пурне те кăлармалла»,—çавăн пек тума хушать рабочи класăн партийĕ.

Хĕвеланăç Германири малта пыракан вăйсем фашизма çĕнĕрен чĕртсе аталантарнине хирĕç йывăр условисенче кĕрешеççĕ. Анчах та вĕсен патриотла ĕçне пĕтĕм тĕнчери мире юратакан халăхсем ырласа кăмăллаççĕ, вĕсем Аденауэрăн реакциллĕ йĕркине тата ăна хӳтĕлесе тăракансене намăслантарса питлеççĕ.

Л. БЕЗЫМЕНСКИЙ.

Азири тата пĕтĕм тĕнчери миршĕн

Китай халăхĕсем Япони милитаризмне çĕнтернĕренпе 8 çул çитни çинчен

ШАНХАЙ, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Китайра тухакан хаçатсем Япони милитаризмне çĕнтернĕренпе 8 çул тултарнине палăртаççĕ. Хаçатсенче Мао Цзэ-дунпа Чжоу Энь-лай çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе Г. М. Маленковпа В. М. Молотов патне янă телеграммăна пичетлесе кăларнă.

Çак кун, тесе çырать «Синьвэньжибао» хаçат, пирĕн, чи малтан, çĕнтерӳшĕн хăйсен пурнăçне панă геройсене хисеплесе пуç тайса пулать тата милитаристла Японие çĕнтерессе тăвас ĕçре Китай халăхне пысăк пулăшу панăшăн хамăрăн аслă союзника—Совет Союзне чĕререн тав тăвас пулать. Китай халăхĕ тата Азири ытти çĕршывсен халăхĕсем, Япони империализмĕн агрессине хăйсен çурăмĕ çинче тӳссе курнă халăхсем, Японире нумай çулсем хушши сарса пынă милитаризмла идейăсем мĕн пек пысăк хăрушлăх пулнине нихçан та манас çук.

Халĕ США пулăшнипе Япони милитаризмĕ тепĕр хут çĕкленет, çар çыннисем пуçĕсене çĕклеççĕ. Анчах агрессорсем Китайра тата пĕтĕм Азире ĕçсем тĕпрен улшăннине манаççĕ. Çак улшăнура Китай Халăх Республикине туса хуни тĕп вырăн йышăнса тăрать. Совет Союзĕпе Китай Халăх Республики хушшинче туслăх, союз тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договор Инçет Хĕвелтухăçĕнче мир ĕçне хӳтĕлесе тăмалли çирĕп шанчăк пулать.

Иккĕмĕш тĕнче вăрçи хыççăн Корейăра тата Вьетнамра, çавăн пекех Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири ытти çĕршывсенче те пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Халĕ Япони те ĕлĕкхи мар ĕнтĕ. Çак улшăнусем вĕсем, тесе паллă тăвать хаçат, империалистсемшĕн усăллă мар.

Халĕ мирĕн вăйĕ, тесе кăтартса пырать юлашкинчен хаçат, Совет Союзĕ ертсе пыракан мирпе демократи лагерьне кĕрекен çĕршывсем хушшинчи пĕрлĕхе тĕреклетесси, Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парассине пур майсемпе те пулăшасси, Япони халăхне нихăçан пăхăнманлăхшăн тата демократишĕн кĕрешес ĕçре пулăшса тăрассине вăйлатасси пулать. Çакăнпа çеç Япони милитаризмне çĕнтерсе тунă ĕçсене хӳтĕлетпĕр тата Азири, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа хăваратпăр.

Студентсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕ хупăннă

ВАРШАВА, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер каçхине Студентсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ хăйĕн ĕçне вĕçленĕ. Студентсен Пĕтĕм тĕнчери союзĕн çĕнĕрен суйланă советне Студентсен пĕтĕм тĕнчери союзне кĕрекен мĕнпур студентсен организацийĕсен представителĕсем кĕнĕ.

Конгресăн юлашки ларăвĕнче Студентсен Пĕтĕм тĕнчери союзĕн исполкомне суйланă. Студентсен пĕтĕм тĕнчери союзĕн президенчĕ пулма Д. Берлингеуэра (Итали), вице-председательсем пулма Китайри, Эквадорти, Индири тата Совет Союзĕнчи студентсен организацийĕсен представителĕсене суйланă. Студентсен пĕтĕм тĕнчери союзĕн генеральнăй секретарĕ пулма Иржи Пеликана (Чехословаки) суйланă.

Кун хыççăн конгресс Студентсен пĕтĕм тĕнчери союзне ĕçлесе тăма комиссисенче туса хатĕрленĕ сĕнĕве йышăннă.

Конгресс Студентсен пĕтĕм тĕнчери союзĕн исполкомĕ «Студентсен кулленхи пурнăçĕ тата Студентсен пĕтĕм тĕнчери союзĕпе студентсен организацийĕсем умĕнче студентсен ыйтăвĕсемпе вĕсен интересĕсене тивĕçтерессишĕн кĕрешес тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен» тунă доклад тăрăх резолюци йышăннă.

Конгресс Студентсен пĕтĕм тĕнчери союзĕ, студентсен тĕрлĕ çĕршывсенчи организацийĕсем студентсен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтермелле тăвас, студентсен туслăхĕпе пĕрлĕхне малалла тĕреклетес тĕлĕшпе юлашки çулсенче хăйсен ĕçне малалла активлатса пынине палăртнă.

Делегатсем тата сăнаса тăракансем хăйсен сăмахĕсенче малашне ĕçсем лайăхланассине шанса тăнине палăртнă, студентсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн студентсен организацийĕсем активлă кĕрешме тăрăшни çинчен каланă.

Юлашкинчен, тăвăллăн тата нумайччен алă çупса, Студентсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ пĕтĕм тĕнчери студентсене чĕнсе калавине йышăннă.

Çурçĕрти çĕршывсен ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 31-мĕшĕнче тата сентябрĕн 1-мĕшĕнче Стокгольмра Швеци, Дани, Норвеги, Исланди ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕ пулнă. Канашлу, тĕпрен илсен, ООН Генеральнăй Ассамблейин çитес VIII-мĕш сессийĕнче сӳтсе явмалли ыйтусене пăхса тухнă. Канашлу вĕçленнĕ хыççăн пĕлтерни пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

«Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсем Корейăра перемирирен çирĕп мир тума тăрăшнине пулăшма шутлаççĕ. Министрсем çакна шанса тăраççĕ: çакăн хыççăн Пекин правительстви часах Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕнче хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнма пултарать».

Пĕлтерниче çавăн пекех тата вăйсăр аталаннă çĕршывсене пулăшу парасси çинчен, Норвеги кандидатурине ООН-ăн экономикăлла тата социальнăй совечĕн членне, Дани кандидатурине — администраципе бюджет ыйтăвĕсем тăрăх ĕçлекен канашлу комитечĕн членне суйлама пулăшасси çинчен тата ытти ыйтусем тĕлĕшпе те канашлура сӳтсе явни çинчен каланă.

Çурçĕрти çĕршывсен ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен çитес канашлăвне 1954 çулта çуркунне Копенгаген хулинче иртерме палăртнă.

АНГЛИРИ ЭЛЕКТРИКСЕН ЗАБАСТОВКИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: электропромышленноçри рабочисен профсоюзне кĕрекен рабочисен забастовки сентябрĕн 2-мĕшĕнче Лондонри докерсенче те пуçланнă.

Забастовкăна атом тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев центрĕсенчи, металлурги завочĕсенчи, станоксем тăвакан заводсенчи тата ытти предприятисенчи 2 пине яхăн электрик хутшăннă.

БРАЗИЛИРИ ЗАБАСТОВКА

МОНТЕВИДЕО, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). «Импренса популар» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Рио-де-Жанейро хулинче кĕленче промышленноçĕнче ĕçлекен 4.000 рабочи забастовка тума пуçланă. Забастовка тăвакан рабочисем ĕç укçи ӳстерме ыйтаççĕ.

ФРАНЦИРИ ЗАБАСТОВКА

ПАРИЖ, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: Гавр хулинче металлургсем 20 кун ĕнтĕ забастовка тăваççĕ. Забастовкăна металлургсем 7.500 çын тата строительство рабочийĕсем 6.500 çын хутшăннă.

Страсбургра портри грузчиксем августăн 29-мĕшĕнче пуçланнă забастовка малалла пырать. Хальхи вăхăтра 866 рабочирен 599 рабочи забастовка тăвать.

БОНН МИНИСТРĔ ПУЛНА ГЕРЕКЕ ТУХСА КАЛАНИ

БЕРЛИН, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви Финстервальдран пĕлтернĕ тăрăх, Анат Саксони çĕрĕн (провинцийĕн) премьер-министр заместителĕ пулнă тата ялхуçалăх министрĕ пулнă Гереке Хĕвеланăç Германири суйлавçăсене сентябрĕн 6-мĕшĕнчи суйлавра Аденауэр ушкăнне хирĕç сасăлама, çапла вара Германие пĕрлештерме тăрăшакан правительство туса хума чĕннĕ.

Индипе Совет Союзĕ хушшинчи культурăлла çыхăну обществин конференцийĕ

ДЕЛИ, сентябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Калькуттăра Индипе Совет Союзĕ хушшинчи культурăлла çыхăну обществин конференцийĕ уçăлнă. Конференци делегачĕсене саламласа, доктор Сунити Кумар Чаттопадхайя çапла каланă: «Эпĕ совет халăхне туслăх ячĕпе алă паратăп».

«Блитц» журнал редакторĕ Каранджия Индипе Совет Союзĕ хушшинчи культурăлла çыхăнăвăн пысăк пĕлтерĕшне палăртса, «Совет Союзĕпе Инди хушшинче культура енĕпе çыхăнмалли çул çинче империалистсем туса хунă Гималай пек пысăк чăрмавсене халĕ пĕтерни ĕнтĕ» тесе каласан, пурте алă çупнă.

Конференци ячĕпе Инди сывлăх министрĕ Раджкумари Амрит Каур, Инди парламенчĕн халăх палатинчи коммунистсен фракцийĕн лидерĕсем Гопалан тата Хирендр Натх Мукерджи, Индири паллă экономист доктор Кумарапп, Инди поэчĕ Хариндранат Чаттопадхай саламсем янă.

КОМБИНАТ КОЛЛЕКТИВĔН ĔÇРИ ÇИТĔНĔВĔ

Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн коллективĕ ĕç тухăçлăхне ӳстернипе пĕрлех çĕр мамăкĕпе ытти тĕрлĕ материалсем перекетлессишĕн тимлĕн кĕрешет. Ку тĕлĕшпе кашни рабочипе работница пысăк обязательство илнĕ.

Комбинат коллективĕ иккĕмĕш кварталта тăван çĕршыва планран иртерсе 74 тонна çип арласа пачĕ. Июльпе август уйăхĕсенче вара планран иртерсе 41 тонна ытла çип панă.

Çав вăхăтрах кунта çĕр мамăкĕпе электроэнерги тата ытти тĕрлĕ материалсем перекетлес тĕлĕшпе те социализмла ăмăртăва вăйлатсах пыраççĕ. Кăçал çичĕ уйăхра çичĕ тонна çĕр мамăкĕ, 191 пин киловатт-сехет электроэнерги перекетленĕ.

ПАХЧА ÇИМĔÇ НУМАЙ ХАТĔРЛЕÇÇĔ

Чăвашпотребсоюз системине кĕрекен организацисем кăçал, иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан, пахча çимĕç ытларах хатĕрлеме тăрăшаççĕ. Республикăри хатĕрлев пункчĕсене кулленех вуншар тонна купăста, хăяр, сĕрулми тата ытти çимĕçсем тăтăшах килсе тăраççĕ.

Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурĕ пин тонна ытла тĕрлĕ пахча çимĕç хатĕрленĕ. Ку енĕпе уйрăмах Улатăр, Вăрнар, Сĕмĕрле, Шупашкар районĕсенче ĕçе лайăх организациленĕ.

Колхозсенчи футбол командисен РСФСР-та мала тухмалли ăмăртăвĕ

Нумаях та пулмасть Хусанта колхозсенчи футбол командисен РСФСР-та мала тухмалли зонăри ăмăртăвĕ пулса иртнĕ. Ăмăртăва Чăваш тата Тутар АССР-ĕсен, Мускав, Горький, Молотов, Новгород облаçĕсен футбол командисем хутшăннă. Чăваш АССР-ĕнчи Сĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхозри футболистсем çак ăмăртура чаплă çĕнтерӳ тунă. Вĕсем Молотов облаçĕн футбол командинчен 5:1, Новгород облаçĕн командинчен — 7:1, Тутар АССР-ĕн командинчен 3:0, Горький облаçĕн командинчен 6:0 шутпа выляса илнĕ.

Колхозсенчи футболистсен Россия Федерацийĕнче мала тухмалли зонăри ăмăртăвĕнче Чăваш АССР-ĕпе Мускав область командисем хушшинчи вăйă уйрăмах интереслĕ пулнă. Мускав облаçĕн команди пысăк мар шутпа—3:2 шутпа çĕнтернĕ. Анчах тепĕр вăйăра Мускав облаçĕн футболисчĕсем Горький облаçĕн футбол командине 2:0 шутпа выляса янă.

Çапла вара колхозсенчи футболистсен Хусанта пулса иртнĕ ăмăртăвĕнче Мускав облаçĕпе Чăваш АССР-ĕн футбол командисем 8-шар очко пухнă. Анчах та Мускав облаçĕн футболисчĕсем ытти командăсен алăкне Чăваш АССР-ĕнчи футболистсенчен ытларах мечка тапса кĕртнĕ. Çакна шута илсен, Мускав облаçĕн команди пĕрремĕш вырăн. Чăваш АССР-ĕн команди иккĕмĕш вырăн йышăннă. Горький облаçĕн футболисчĕсем виççĕмĕш вырăна, Тутар АССР команди — тăваттăмĕш вырăна, Молотов облаçĕн команди пиллĕкмĕш вырăна, Новгород облаçĕн команди улттăмĕш вырăна тухнă.

Мускав облаçĕн команди колхозсенчи футболистсен РСФСР-та мала тухмалли финалти ăмăртăвне хутшăнать.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТРА

Умстатья.—Кĕрхи çĕртмене хăвăрт тата лайăх туса хăварар.

Мускаври тата Днепропетровскри предприятисенчи рабочисемпе служащисем, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕн тата Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн пленумĕн итогĕсем тăрăх иртернĕ пухусем çинчен пĕлтернисем.

Республикăри уй-хирсенче.

Продукция хăйне ларакан хакне пĕрмаях йӳнетсе пымалла (Канашри вагонсем юсакан заводра пулнă экономикăлла конференцирен).

Юмахри пек чаплă çын (Совет Çарĕн Центральнăй музейĕнчи В. И. Чапаев çинчен калаçа паракан материалсем).

Урăх çĕршывсенчен тата вырăнсенчен килнĕ хыпарсем.

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

КИНО

«РОДИНА»—сентябрĕн 5-мĕшĕнче пур сеанссенче те илемлĕ çĕнĕ фильм «Арена смелых». Сеанссем 12, 14, 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

«УДАРНИК»—сентябрĕн 5-мĕшĕнче «Три товарища».

ШУПАШКАРТИ ТАТА РЕСПУБЛИКĂРИ ЭКРАНСЕМ ÇИНЧЕ
„ИХ БЫЛО ПЯТЕРО"
ятлă илемлĕ çĕнĕ фильм кăтартма пуçлаççĕ.
Фильма Францири «Сюд-фильм» тата «Жанник-фильм» ӳкернĕ.

Хаçат-журнал çырăнса илĕр!
1953 çулхи тăваттăмĕш кварталта илсе тăма
„КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ", „СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ"
„МОЛОДОЙ КОММУНИСТ", „ÇАМРĂК КОММУНИСТ"
хаçатсем тата
„АГИТАТОР БЛОКНОЧĔ"
(вырăсла тата чăвашла тухаканнисене) çырăнса илĕр.
Хаçат-журнал илсе тăма «Союзпечать» уйрăмĕсенче тата кашни почтăра çырăнма пулать. Письмоносецсем граждансен килĕсенче, хаçат-журнал сарма уйăрнă çынсем заводсемпе фабрикăсенче, учрежденисенче, шкулсенче, колхозсемпе МТС-сенче подписка йышăнаççĕ.

ИРАК ПРАВИТЕЛЬСТВИ ОТСТАВКĂНА ТУХНĂ

БЕЙРУТ, сентябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Бейрутри радио пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Ирак премьер-министрĕ Джамиль Мадфаи Ирак корольствине Фрисала правительство отставкăна тухни çинчен заявлени панă. Король заявление йышăннă. Фрисал çĕнĕ правительство туса хурас ыйту тăрăх консультацисем иртерме пуçланă.

КОРЕЙĂРА ТЫТĂНРИ ÇАР ÇЫННИСЕНЕ РЕПАТРИАЦИ ТУНИ

ПЕКИН, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Корейăпа Китай енĕ паян тыткăнри çар çыннисене: 100 американец тата 199 кореец тавăрса панă. Тепĕр енĕ Корея Халăх çарĕн тыткăнри çар çыннисене 2.397 çын тавăрса панă.

Чехословаки Корея Халăх Республикине пулăшать

ПРАГА, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви çапла пĕлтерет:

Чехословаки Республикин правительстви çак кунсенче Демократиллĕ Корея Халăх Республикине пулăшу парасси çинчен сӳтсе явнă.

Чехословаки республикин правительстви, икĕ халăх хушшинчи туслăха шута илсе, халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантарас ĕçре Демократиллĕ Корея Халăх Республикине пысăк пулăшу пама йышăннă. Çак пулăшу вăл материалсем тăратнине те, наукăпа техника тĕлĕшĕнчен пулăшу панине те пулса пырать.

Тайвань утравĕ патĕнче пысăк маневр иртереççĕ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, США тинĕс-çар министерстви çапла пĕлтернĕ: линкор «Нью Джерси» тата эскадра миноносецĕ «Флетчер» «Тайвань утравĕ патĕнче тинĕс-çарĕпе сывлăш-çар вăйĕсем иртерекен пысăк маневра хутшăнаççĕ. Маневра гоминдановецсен сывлăш-çар вăйĕсем те хутшăннă.

Тинĕс-çар министерстви çапла пĕлтернĕ: маневра Тайвань утравĕ çинче вырнаçса тăракан тĕрлĕ йышши самолетсен отрячĕсем хутшăнаççĕ.

Маневра Америкăн Тайвань утравĕ çинчи çар миссийĕн пуçлăхĕ Чейз генерал ертсе пырать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-59, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—5-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01458 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20.000 экз.